1906 çулхи январён 21-мёшёнче тухма тытăннă 1918 çулхи февраль уйăхёнчен тёрлё ятпа тухнă 1991 çулхи августăн 30-мёшёнче "ХЫПАР" ятпа тепёр хут тухма пуçланă

ХЫПАР

"ХЫПАР" никёслевçи Н.В.Никольский (1878–1961)

240/26646/ № Юнкун, 2014, декабрь/раштав, 17 Хакё ирёклё www.hypar.ru

Техникăна газ-па ёçлеттерни перекетлёрех 2

«Итлёр-ха, эпё чăлах мар вёт...» 3

«Çумра çук пулсан та – чунра пур» 4

ФОРУМ

Культура çулталăкёнчен – К.В.Иванов çулталăкне,

е «чун инженерёсем» пире мёнпе хавхалантарёç?

Культура министерствин сайнён сăнăкерчёкё

Январён варринче Чăваш патшалăх операпа балет театрёнче Культура çулталăкне савăнăçлă лару-тăрура уçни халё те куç умёнчех-ха. Акă çулталăк вёçленчё те. Кёçех вăл та историе юлё. Çавна май ёнер тёп хулари «Mega Galaxy» культурăпа кану центрёнче Чăваш Енри культура ёçченёсен пысăк форумё иртрё. Çак тапхăрта мён тунине пётёмлетмелли, палăртнă тёллевсене пахаламалли самант пулчё темелле вăл. Мёнпе асра юлё кăмăл-сипетпе чун апатне хатёрлекенсен çулё? «Чун инженерёсен» çулталăкёнчен мён кётетпёр?

Форума 400 яхăн хăна хутшăнчё, вёсен йышёнче – Мускаври Национальноçсен çурчён, федерацин Атăлçи округёнчи субъекчёсен явапла çыннисем, тăван республикăри культура ёçченёсем, Раççейри тата чикё леш енчи экспертсем...

Республикăри культура пулăмёсен сеть марафонён хўттипе йёркеленё сумлă мероприятие Чăваш Республикин Пуçлăхё Михаил Игнатьев, ЧР Патшалăх Канашён комитет ертўçи, «Пёрлёхлё Раççей» партин Чăваш Енри уйрăмён секретарё Николай Малов, ЧР Патшалăх Канашён комитет ертўçи Петр Краснов хутшăнчёç.

Михаил Игнатьев форума пуçтарăннисене саламланă май Культура çулталăкёнчи тёп ёçсем çинчен чарăнса тăчё. «Пётём ёçе хаклас-тăк – палăртнă тёллевсене пурнăçланă, – терё вăл. – Культура çулталăкёнче пёрремёш вырăнта çынпа, çемьепе çыхăннă пахалăхсем пулчёç. Малашне те çаплах пулё. Культура çулталăкё çакăнпа вёçленмест. Чăвашсем авалтанпах хăйевёрлёхне, йăли-йёркине сыхласа хăварас тёлёшпе палăрса тăнă. Культурăсăр халăх та, çёршыв та пулмасть...»

Михаил Васильевич республикăра культура ёçченён статусне çёклес тёлёшпе тăвакан ёçсене палăртрё. Патшалăх ку енёпе сахал мар тăрăшать. Кашнийё хăйён вăйне, пултарулăхне, ăсталăхне кăтартсан, вёсемпе туллин усă курсан çеç малалла аталанма майсем пур. Республика кăтартăвёсем вара ку енёпе начар мар. Сăмахран, демографи лару-тăрăвё те юлашки виçё çулта самай лайăхланнă. Ялсенче те улшăнусем пур. Культура çурчёсем, клубсем, вулавăшсем çёнелеççё, вёсенче çёнё йышши техникăпа усă кураççё. Михаил Васильевич чăваш ялёнчи хальхи чи çивёч ыйтусен шутне çамрăксем валли тивёçлё ёç вырăнё тăвассине кёртрё. Ку енёпе мён тунине, тума палăртнине асăнса тухрё.

Михаил Игнатьев пушă алăпа килмен форума. Тăван культурăра нумай çул тăрăшса ёçленисен, кăмăл-сипет, ăс-хакăл пуянлăхне упраса тата малалла аталантарса пыракансен пёр ушкăнне патшалăх наградисемпе чысларё, сумлă ятсем, парнесем пачё. Çак кун К.В.Иванов ячёллё искусстви енёпе ирттерекен «Ылтăн маска» преми лауреачё пулса тăнине пёлтёмёр. Саккăрăн тивёçнё ку чыса. Пирён ентешёмёрён ячё Армен Джигарханян, Майя Плисецкая, ытти сумлă çынсен хушшинче.

Хăйсен ёçёпе палăрнисене Раççей тава тивёçлё артисчё, театр тата кино актерё Евгений Дятлов Булат Окуджавăн юррипе саламларё.

Форума савăнăçлă лару-тăрура уçнă хыççăн иртнё пёрремёш мероприяти – «Культура – регионсен аталанăвён стратеги вăй-халё» «çавра сётел». Ăна ЧР культура министрё Вадим Ефимов ертсе пычё.

Хăнасем – Мари Республикин культура, пичет тата национальноçсен ёçёсен министрё Михаил Васютин, Ульяновск облаçён культура политикипе искусство министрё Татьяна Ившина, Мускаври национальноçсен çурчён директорён заместителё Александр Пономарь, географи ăслăлăхёсен кандидачё, Вырăс генеалоги обществин президенчё, Раççей наци библиотекин генеалоги институтчён директорё Игорь Сахаров сăмах илчёç. Вёсем хăйсен регионёсенчи культурăпа, йăла-йёркепе, тăванлăхпа çыхăннă ыйтусем тавра калаçрёç. Эпё вара Вадим Ефимов Чăваш Енре Культура çулталăкёнче тунă ёçсем çинчен тунă доклад пирки чарăнса тăрасшăн.

Культура çулталăкёнче çыншăн çав тери пёлтерёшлё отрасле аталантарас тёлёшпе мён тунă? Çакна пёлтёмёр: юлашки 20 çулта пуçласа муниципалитет шайёнчи ачасен музыка шкулёсемпе искусство шкулёсем валли музыка инструменчёсем туянма 2,5 млн тенкё укçа уйăрнă, çавăн чухлех федераци бюджетёнчен парса пулăшнă. Раççей Культура министерствин тата республика Правительствин хўттипе гастроль ёçхёлне вăйлатма май килнё.

● ➡ 2 стр.

✔ КУЛЬТУРА ÇУЛТАЛĂКЁНЧЕ ПЁРРЕМЁШ ВЫРĂНТА ÇЫНПА, ÇЕМЬЕПЕ ÇЫХĂННĂ ПАХАЛĂХСЕМ ПУЛЧЁÇ. МАЛАШНЕ ТЕ ÇАПЛАХ ПУЛЁ. КУЛЬТУРА ÇУЛТАЛĂКЁ ÇАКĂНПА ВЁÇЛЕНМЕСТ

ЛАРУ

Влаça текех сехёрлентермёç

Чăваш Республикин вырăнти хăйтытăмлăх органёсен ёç-хёлне сăнаса тăракан ведомствăсен хушшинчи комиссийён хальхи ларăвёнче тăваттăмёш кварталта влаç тытăмёсенче федерацин Шалти ёçсен министерствин Чăваш Енри ÇÇХПИ управленийё, РФ финанспа бюджет надзорён республикăри территори управленийё, РФ Пенси фончён Чăваш Республикинчи уйрăмё, федерацин патшалăх çул-йёр надзорён транспорт сферинчи надзорён Чăваш Республикинчи управленийё, Чăваш Республикинчи патшалăх ёç инспекцийё ирттернё тёрёслевсене пётёмлетрёç.

Çак комиссие Чăваш Ен Пуçлăхён 2013 çулхи февралён 2-мёшёнчи йышăнăвёпе йёркеленё. Михаил Игнатьев ертсе пынă ларăвăн кун йёркинче тăватă ыйту пулчё.

Пёрремёш ыйтупа сăмах илнё Чăваш Республикин Муниципалитет йёркеленёвёсен канашён ёç тăвакан директорё Станислав Николаев палăртнă тăрăх – кăçалхипе иртнё çулсенчи тёрёслевсенче, маларахри тапхăрсемпе танлаштарсан, ырри ытларах пулни палăрать. Унченхисенче айăпа кёнёшён явап тыттарас туртăм пысăкрах пулнă-тăк, халё – тунă йăнăшăн сăлтавне тишкерме, малашне унран хăтăлма пулăшасси тёпре. Çакă икё тытăм хушшинчи хутшăнăва чылай лайăхлатма пулăшнă. Сăмахран, акă, 2012 çулта тёрёслев органёсем влаça 515 хут тёрёсленё, 232 штраф санкцийё йышăннă, пёлтёр вёсен шучё те, калăпăшё те самаях пёчёкленнё: 270 тёрёслевпе 44 штраф. Кăçалхи тёрёслевсен пётёмлетёвёпе – 1068, çав шутра должноçри – 1059, юридици сăпачёллё 3 çынна, явап тыттарнă. Ылтарахăшё – дисциплина йышёнчи, икё тёслёхпе уголовлă ёç пуçарнă. Штраф калăпăшё те пёчёкех мар: должноçрисен – 462 пин тенкё, юридици сăпачёсен – 30 пин ытларах.

Патшалăх органёсем ёçре пёрпёрне чăрмантарни çинчен те сăмах пулчё ларура. Хăшпёр документа е пёр-пёр цифрăна вырăнти хăйтытăмлăх органён сайтёнче те тупма май пур çёртех вăл е ку ведомство малтан асăннă тытăм патне запрос çитерет, ăна çийёнчех пурнăçлама хушать. Çакăн пек «хушусене» пурнăçласа специалистсен хăйсен ёçёнчен пăрăнма, вăхăтне çухатма тивет. Кăçал ун пек 120 тёслёх пулнă.

Пирён республикăра муниципалитет ертўçисем тёрёслевпе надзор органёсемпе пёрле килёштерсе, пёр-пёрне чăрмав кўмесёр ёçлесси çинчен икё енлё килёшў тăваççё. Халиччен ун пек 14 килёшёве алă пуснă. Вёсем мёнле пурнăçланнине Муниципалитет йёркеленёвёсен канашён правленийё çирёп тёрёслесе тăрать. Çакăн уссине вырăнти хăйтытăмлăх органёсем çийёнчех туйса илнё, хутшăнусем, тёрёслевсем уçăмланнине, çивёчленнё ыйтусен шучё чакнине палăртаççё. Сăмахран, Раççей Федерацийён МЧСён республикăри тёп управленийё кăçал малтан палăртса тёрёслевсем ирттерме йышăнман. Вырăнтисем сённипе кăна муниципалитетсене çитнё, ыйтусене пёрле татма тăрăшнă. Ку – ырă пулăм. Тёрёслев органёсем çирёп ыйтасси те муниципалитетăн финанс лару-тăрăвне, укçа-тенкё майёсене тата кадрсен ăсталăхне шута илсе пыма тытăннă. Тепёр ырă ен те пур: тёрёслев органёсем вырăнти хăйтытăмлăх органёсем ирттерекен семинарсене, ытти мероприятие хутшăнса ăнлантару ёçне тăтăш тăваççё, тёрлё ыйтупа консультаци ирттереççё. Ку ял тăрăхёсен, район администрацийёсен пуçлăхёсене хăйсен ёçне тёрёс, саккунсемпе килёшўллён /мён пытармалли: пуçлăхсенчен чылайăшён аслă юридици пёлёвё çук, саккунсене те тăтăш хушăмсемпе улшăнусем кёртеççё – йăнăшасси пулчё те/ пурнăçлама пулăшать.

Хула округёсенчи тата муниципалитетсенчи прокуратура ёçченёсем те влаç тытăмне вёсен пулăшăвё питё кирлине ăнланса илнё. Халё вёсем правăпа норма акчёсене тёрёс, саккун хушнă пек йёркеleме хастар хутшăнаççё. Тепёр чухне прокурорсем хăйсем ку е вăл саккун пуçаруçи вырăнёнчех пулаççё.

Çав вăхăтрах ăнланулăх çукки ура хурать. Федерацин республикăри территори управленийёсенчен хăшё-пёри /налук служби, монополипе кёрешекен служба, çыхăну, информаци технологийёсен тата массăллă коммуникацисен сферинчи надзор служби/ айăплисенчен, тен, ытлашшипех çирёп ыйтать, анчах тунă йăнăша тўрлетме, вăл текех ан пултăр тесе пулăшма акт çырнă хыççăн питех «хапăл мар». Ларура çавăнпа мобильлё ушкăн вырăнта пулса тёрёслесе пётёмлетў тунă хыççăн тин йышăну тума сёнчёç.

Ларăвăн иккёмёш пайёнче РФ Шалти ёçсен министерствин Чăваш Енри ÇÇХПИ управленийён начальникё Владимир Романов полковник, РФ финанспа бюджет надзорён республикăри территори управленийён ертўçи Нина Константинова, РФ Пенси фончён Чăваш Республикинчи уйрăмён управляющийё Роза Кондратьева, Чăваш Республикинчи патшалăх ёç инспекцийён ертўçин тивёçёсене пурнăçлакан Раиса Павлова кăçалхи тăваттăмёш кварталти тёрёслевсен пётёмлетёвёсемпе паллаштарчёç. Вёсем тухса каланинче район администрацийёсен, ял тăрăхёсен пуçлăхёсем валли вёсем ырă сёнў нумай пулчё.

Лару вёçёнче ведомствăсен хушшинчи комиссин 2015 çулхи ёç планне пур енлён тишкерсе çирёплетрёç.

■ Юрий ЛИСТОПАД

Чăваш Республикин пиллёкмёш суйлаври Патшалăх Канашён черетлё çирём улттăмёш сессийё уçăласси çинчен

Чăваш Республикин пиллёкмёш суйлаври Патшалăх Канашён черетлё çирём улттăмёш сессийё 2014 çулхи декабрён 19-мёшёнче Правительство çурчён Ларусен пысăк залёнче /Шупашкар хули, Президент бульварё, 17 çурт/ уçăлать. 10 сехетре пуçланать.

Чăваш Республикин Патшалăх Канашён депутачёсене тата чённё хăнасене Правительство çурчён Ларусен пысăк залёнче 2014 çулхи декабрён 19-мёшёнче 9 сехетрен пуçласа регистрацилеççё.

Ыйтса пёлмелли телефон: 64-21-65.

КУН хыççăн КУН
☎ 56-04-26

«Çёнё çулта – çёнё çемьере»

Çак ятпа пирён республикăра ятарлă акци пуçланнă. Ăна ашшё-амăшён хўттисёр юлнă ачасене çемьесене вырнаçтарассине вăйлатас тёллевпе йёркеленё.

Уйăхлăх ЧР Вёрентўпе çамрăксен политикин министерствипе район-хула администрацийёсем пуçарнипе иртет. Опекăпа попечительство пайён ёçченёсем пёлтернё тăрăх – çак тапхăрта ача çурчёсемпе интернатсенче пурăнакан тăлăхсене вăхăтлăха çемьене илме, вёсене Çёнё çулпа Раштав уявёсене тата хёллехи каникула ыррăн та савăнăçлăн ирттерме майсем туса пама пултараççё. «Ачасем кил ăшшине туйччăр, çутă шухăштёллевпе çунатланччăр, пысăк çитёнўсем тума хавхаланччăр. Мёншён тесен вёсем пурте çемьере пурăнма ёмётленеççё, вёсене кашнине ашшё-амăшё кирлё», – теççё çак ятарлă акцие ирттерекенсем.

А.ПЕТРОВ.

Пирён спортсменсем çёнтернё

Мускавра «Урожай» спорт обществи Пётём Раççейри ял спортсменёсен йăлана кёнё ăмăртăвёсене пётёмлетнё.

Пётём Раççейри ку ăмăртусене спортăн 17 енёпе йёркелеççё, яланхи пекех вёсем тёрлё регионта иртеççё. Çак чыса кăçал Чăваш Ен те тивёçнё: Кўкеç поселокёнчи стадионта çёршыври чи маттур кёрешўçёсем, чупакансем тата хăвăрт утакансем вăй виçнё, вёсем 29 медале тивёçнё. Çавăн пекех ентешсем кире пуканё йăтакансен, вёрен туртакансен, самбо, кросс, армспорт тата шашка турнирёсенче малти вырăнсене йышăнса тёрлё медаль çёнсе илнё. Ăмăртусен пётёмлетёвёпе Чăваш Енён пёрлештернё команди пьедесталăн виççёмёш картлашки çине хăпарнă. Тăван тăрăха вёсем «Урожай» спорт обществин дипломёпе тата кубокёпе таврăннă. Хавхалантару парнисемпе ЧР спорт министрне Сергей Мельникова тата унăн заместительне Алексей Яковлева, ЧР ялхуçалăх министрне Сергей Павлова, республикăри «Урожай» спорт обществин ёç тăвакан директорне Екатерина Петровăна тата ыттисене чыслана.

А.МИХАЙЛОВ.

Республика картти: тинех чăвашла!

Шупашкарти хăшпёр организацин офисё Çёнё çул умён хамăр республикăн çёнё карттине илемлетрё. Картографире халиччен пулманни: хулапа ял ячёсем – йăлт чăвашла!

Ку шухăш интернетра «Чăваш сайтне» тытса пыракан Николай Плотников пуçёнче çуралнă. «Карттăна хăш хулара пичетленине асăнма тăхтăпăр, туянас текенсене пирён интернет лавкка сайтне (вăл «Сум» ятлă) кёме сёнесшён», – терё вăл.

Çёнё картта мёнле сутăнни – коммерци вăрттăнлăхё. Пёрремёш парти 300 экземплярпа çеç тухнине пёлме май килчё. Типографи тăкакёсене саплаштарсан тата чăваш картти аван сутăнсан ăна ытларах тиражпа çапассине пытармарё пуçаруçă.

Г.СЛАВИН.

Куравра – хурçă утсем

Элёкри литературăпа таврапёлў музейёнче Шупашкарти трактор историйён музейён куçса çўрекен «Хурçă ут» куравё уçăлнă.

Трактор музейён директорё Альберт Сергеев хăй ертсе пыракан учрежденин ёçё-хёлёпе, кун-çулёпе паллаштарнă, виртуаллă видеоэкскурси кăтартнă. Кураври плакатсемпе картинăсем хамăр çёршывра тата тёнчере трактор тăвасси епле вăй илсе пынине сăнласа параççё. Экспозицире çавăн пекех Раççейре тата чикё леш енче 20-мёш ёмёрте туса кăларнă тракторсемпе радио хумёпе ёçлекен техникăна та курма пулать.

Трактор историйён музейне «Трактор завочёсем» концерн президенчё Михаил Болотин пуçарнипе 2011 çулхи октябрён 29-мёшёнче уçнă. Паян вăл культура учрежденийё кăна мар, вёрентўпе ăслăлăх центрё пулса тăнă.

А.ПЕТРОВ.

Çанталăк çинчен

Паян пёлётлё çанталăк пулать, кăштах юр çăвать. Çил кăнтăртан 4 метр хăвăртлăхпа вёрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 3 градус сивё, çёрле 0 градус.** Атмосфера пусăмё 757 мм, сывлăшри нўрёк 84 процент.

Кун тăршшё 6 сехет те 57 минут.

Ыран ăмăр çанталăк пулать, юр çăвать. Çил кăнтăр-хёвеланăçёнчен 5 метр хăвăртлăхпа вёрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 1 градус ăшă, çёрле 0 градус.** Атмосфера пусăмё 748 мм, сывлăшри нўрёк 91 процент.

Кун тăршшё 6 сехет те 56 минут.

Культура çулталăкĕнчен – К.В.Иванов çулталăкне...

/Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр./.

Удмурт, Мордва, Мари, Калмăк республикисенчи театрсен ĕçĕсемпе киленме, хамăрăн пултарулăха унта пурăнакансене кăтартма пултарнă. Раççей музейĕсен фончĕсенчи чаплă произведенисемпе паллашма мехел çитернине те ырламалла.

Патшалăх укçа-тенкĕпе пулăшни республикăшăн пĕлтерĕшлĕ темиçе мероприяти йĕркеленме май панă. Сăмахран, тĕрлĕ курав, фестиваль, конкурс, концерт тата ытти те иртнĕ. Андриян Николаев космонавтăн 85 çулхи, Чăваш халăх поэчĕн Геннадий Айхин 80 çулхи, Анисим Асламас композиторăн 90 çулхи юбилейĕсене çÿллĕ шайра йĕркеленĕ, палăксем, Асăну хăмисем уçнă.

Ял – тăван культурăна вăй-хал парса тăраканĕ. Пирĕн пуласлăх пĕтĕмпех унпа тачă çыхăннă. Ку енĕпе мĕн калама пулать-ха? Ялти культура учрежденийĕсене тĕслĕх шая çĕклесси çинчен программа йышăннă хыççăн 184 культурăпа кану çуртне юсанă, 109-шне хальхи вăхăтри хатĕрсемпе тивĕçтернĕ. Кăçал çак ĕçсене пурнăçлама республика бюджетĕнчен 22,7 млн тенкĕ уйăрнă. Çакă тата 27 клуба юсама май парĕ. Тĕпрен юсанă клубсене тĕслĕх шая çĕклеме республика 10 млн тенкĕ куçарса пама палăртнă, федераци бюджетĕнчен – 15,2 млн тенкĕ.

Паллах, çивĕч ыйтусем те питĕ нумай-ха. Сăмахран, халăхра вулав культури чакса пырать. Ку енĕпе те çĕршыв ертÿçисем тивĕçлĕ ĕçсем тума палăртаççĕ. Раççей Президенчĕ Владимир Путин çитес çула Литература çулталăкĕ тесе пĕлтерчĕ, Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев вара 2015 çулта вилĕмсĕр «Нарспи» поэма авторĕн К.В.Иванован çулталăкне ирттерме указ кăларчĕ. Çапла Культура çулталăкĕнчен Иванов çулталăкне çул уçрăмăр.

■ **Надежда СМИРНОВА**

Саламлатпăр

Чăваш Республикин Пуçлăхĕн 2014 çулхи декабрĕн 16-мĕшĕнчи 170-мĕш указĕпе килĕшÿллĕн ĕçри çитĕнÿсемшĕн тата нумай çул тÿрĕ кăмăлпа вăй хунăшăн Чăваш Республикин «Муркаш районĕн тĕп больници» бюджет учрежденийĕн травматолог-ортопед врачне **Леонид Николаевич АНДРЕЕВА,** «Çĕмĕрлери ятарлă автомобильсен завочĕ» акционерсен уçă обществин производствăпа диспетчер пайĕн пуçлăхне **Тамара Ивановна БАТОРШИНĂНА,** Шупашкар хулинчи «Чăваш Ен курорт» санатори» акционерсен уçă обществин инженер-гидрогеологне **Анатолий Федорович ИВАНОВА,** муниципалитетăн ачасене хушма пĕлÿ паракан «Шупашкарти ачасен С.М.Максимов ячĕллĕ музыка шкулĕ» бюджет вĕренÿ учрежденийĕн флейта калама вĕрентекен преподавательне **Анжелика Викторовна СИДОРОВĂНА ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ХИСЕП ГРАМОТИПЕ** наградăланă;

музыка искусстви енĕпе тунă тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн тата пултарулăхри ăнăçлă ĕçхĕлшĕн Чăваш Республикин «Чăваш патшалăх филармонийĕ» автономи учрежденийĕн «Çеçпĕл» ансамблĕн юрăçă артисткине /солисткине/ **Ольга Васильевна ПРОКОПЬЕВĂНА «ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ТАВА ТИВĔÇЛĔ АРТИСЧĔ»** хисеплĕ ят,

сывлăх сыхлавĕ енĕпе тунă тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн тата нумай çул тÿрĕ кăмăлпа вăй хунăшăн Чăваш Республикин Пуçлăхĕн Шупашкар хулинчи «Хулари 7-мĕш больница» бюджет учрежденийĕн хĕрарăмсен консультацийĕн заведующине, врач-акушер-гинекологне **Ираида Александровна ВЕНЕДИКТОВĂНА,** Чăваш Республикин «Пăрачкав районĕн тĕп больници» бюджет учрежденийĕн участок врач-педиатрне **Татьяна Алексеевна ЧЕСНОКОВĂНА «ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ВРАЧĔ»** хисеплĕ ят,

культура енĕпе тунă тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн тата нумай çул ăнăçлă вăй хунăшăн муниципалитетăн ачасене хушма пĕлÿ паракан «Шупашкарти ачасен В.П.Воробьев ячĕллĕ музыка 2-мĕш шкулĕ» бюджет вĕренÿ учрежденийĕн директорĕн класс тулашĕнчи ĕçсем енĕпе тăрăшакан заместительне **Елена Витальевна АНАНЬЕВĂНА,** Чăваш Республикин «Чăваш Ен» наци телерадиокомпанийĕ» автономи учрежденийĕн информаци программисен редакцийĕн пайĕн пуçлăхне **Елена Александровна ГАЛЬПЕРИНĂНА,** муниципалитетăн «Чăваш Республикин Елчĕк районĕнчи Аслă Пăла Тимеш ял тăрăхĕн Аслă Пăла Тимешри информацифе культура центрĕ» бюджет культура учрежденийĕн филиалĕн – Сăрьелĕнчи ялти культура çурчĕн заведующине **Зевдет Рифгатович САЛАХУТДИНОВА,** Элĕк район администрацийĕн социаллă аталану, культура тата архив ĕçĕн секторĕн заведующине **Людмила Степановна СЕМЕНОВĂНА «ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН КУЛЬТУРĂН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ĔÇЧЕНĔ»** хисеплĕ ят,

строительство енĕпе тунă тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн тата нумай çул тÿрĕ кăмăлпа вăй хунăшăн Çĕмĕрле хулинчи «3-мĕш стройтрест» акционерсен хупă обществин тытăмне кĕрекен «8-мĕш строительство управленийĕ» тулли мар яваплă обществăн каменщикне **Иван Алексеевич БОРИСОВА,** Шупашкар хулинчи «Спецстройкоммуникацисем» тулли мар яваплă обществăн директорĕн производство енĕпе ĕçлекен заместительне **Станислав Пименович ПОПОВА «ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ТАВА ТИВĔÇЛĔ СТРОИТЕЛĔ»** хисеплĕ ят,

саккунлăхпа право йĕркине çирĕплетес енĕпе тунă тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн Чăваш Республикин прокурорĕн нацисен хушшинчи хутшăнусем çинчен, политика репрессийĕсене пула хур тÿснисене реабилитацилесси çинчен калакан саккунсене пурнăçланине тата хăрушсăрлăх органĕсем процесс ĕçхĕлне пурнăçланине асăрхаса тăракан аслă пулăшаканне **Ирина Николаевна ПАПШЕВĂНА «ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ЮРИСЧĔ»** хисеплĕ ят панă,

вырăнти хăйтытăмлăх аталанăвне пысăк тÿпе хывнăшăн тата нумай çул тÿрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн Комсомольски районĕнчи Хирти Сĕнтĕр ял тăрăхĕн пуçлăхне **Геннадий Егорович ЕФРЕМОВА «ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧИ ВЫРĂНТИ ХĂЙТЫТĂМЛĂХ ОРГАНĔÇЕНЧЕ ТÿРĔ КĂМĂЛПА ĔÇЛЕНĔШĔН»** Мухтав паллипе наградăланă.

ШУХĂШ

Фермерсене патшалăх пулăшăвĕ кирлех!

Унсăрăн вĕсем аталанаймĕç

Кам ăçта çуралнă, çавăнта кирлĕ пулнă теççĕ. Чылай чухне çак каларăш чăнлăхпа килĕшсе тăмасть. Калăпăр, асаттесен йăлипе тĕпкĕчĕн ашшĕ-амăшĕн килĕнчех пурăнмалла, анчах вăл ялта юласшăн мар.

Савнă ен илемне хушăнтарас, тăван çĕр пулăхне ÿстерес кăмăл-туйăмпа çитĕнекенсем çуралнă кĕтесрех тĕпленеççĕ. Пĕлеççĕ: кунта та тулăх пурăнма, телейлĕ пулма мĕн кирли йăлтах пур – ăна вăхăтра асăрхама тата илме ĕлкĕр çеç, пурнăç таппинчен ан юл. Çакна ĕçчен те çаврăнăçуллă çынсем çамрăклах капмар çуртсем çĕклени, чаплă автомашина е урăх техника туянма пултарни те аван çирĕплетет. Патшалăх сана çĕклеме, хушма хуçалăхна аталантарма ятарлă программăсем йышăнса тĕрлĕ енлĕ пулăшать. Вĕсем-пе мĕншĕн тĕллевлĕн усă курас мар?

Чăваш Ен 2012 çултанпа федерацин "Ĕçе пуçăнакан фермерсене 2012-2014 çулсенче пулăшасси" тата "Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетекен çемье фермисене хресчен-фермер хуçалăхĕн никĕсĕ çинче аталантарасси" программăсене ăнăçлă пурнăçлать. Çакна ЧР Ялхуçалăх министерстви Пĕтĕм Раççейри "Ылтăн кĕркунне – 2014" АПК куравĕнче çĕнсе илнĕ награда тăрăх та хаклатпăр. Тăван республика "Ĕçе пуçăнакан фермерсене пулăшмалли мероприятисене тухăçлă пурнăçа кĕртнĕшĕн" конкурсра ылтăн медаль тата I степень Диплом çĕнсе илнĕ.

Виçĕ çулта ятарлă программăсемпе килĕшÿллĕн республикăра ĕçе пуçăнакан 151 фермер тата выльăх пăхакан 16 çемье ферми хăйсене ятран паракан гранта тивĕçнĕ. Чăвашстат кăтартăвĕсемпе килĕшÿллĕн 2014 çулхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне Чăваш Енре 1097 ХФХ шутланнă. Кăçалхи тăхăр уйăхра тата 120 хушăннă. Халĕ вĕсен шучĕ 1215 çитнĕ.

ЧР Ялхуçалăх министерствинчен пĕлтернĕ тăрăх – çемье фермисем 2012-2014 çулсенче патшалăхран пулăшу 91 млн тенкĕлĕх илнĕ, вăл шутра федераци хыснинчен – 57, республика бюджетĕнчен – 34 млн яхăн тенкĕ. Конкурссенче 2012 ç. – 3, 2013 ç. – 7, 2014 çулта 6 çемье çĕнтернĕ /13-шĕ – сĕт, 3-шĕ аш-какай туса илеççĕ/.

Тăван еннĕн явапăха туякансем субсидие пула юлашки 3 çулта машина-трактор паркне çĕнĕ вун-вун техникăпа пуянлатнă, сĕт туса илме – 418, ашлăха 196 пуç ĕне выльăх туяннă. Çемье фермисенче кĕтÿ пĕтĕмпе – 2628 пуçа /пĕлтĕрхинчен 2,5 хут нумайрах/, çĕр лаптăкĕ 16,2 пин гектара çитнĕ, 86 ĕç вырăнĕ йĕркеленĕ.

Патшалăх пулăшăвĕпе усă курнисенчен Григорий Атласкин /Комсомольски районĕ, Çĕнĕ Шăхран/ 200 ĕне вырнаçмалăх ку чухнехи ферма тата сĕт сумалли зал, Михаил Тагеев /Сĕнтĕрвăрри, Октябрьски/ 140 пăру валли хăтлă вите, Александр Бикуловпа /Елчĕк, Яманчурел/ Валерий Ермолаев /Сĕнтĕрвăрри, Хуракасси/ 100-шер пуç ĕне выльăх усрамалăх витесем хута янă. Юрий Голубев /Пăрачкав, Сыреç/ шултра выльăх ашлăх ĕрчетмешкĕн тума тытăннă ферма проекчĕн пĕрремĕш тапхăрне вĕçленĕ. Ытти грантпа та тĕллевлĕн усă кураççĕ, производство калăпăшĕсене анлăлатса пыраççĕ.

Ĕçе пуçăнакан 151 фермера /54-шĕ çак йыша кăçал хушăннă/ патшалăх 2012-2014 çулсенче 159 млн тенкĕпе пулăшнă, вăл шутра федераци хыснинчен – 112 млн яхăн, республика бюджетĕнчен 47,3 млн тенкĕ. Пысăк пайĕ тĕштырă, пахча çимĕç туса илет, выльăх ĕрчетет. Пулă, шиншилла çитĕнтерекен, хурт-хăмăрпа ĕçлекен те пур.

Пулас фермерсен виçĕ хутчен иртнĕ суйлав конкурсне республикăри мĕнпур муниципалитет йĕркеленĕвĕ хутшăннă. Мал ĕмĕтлисен ĕне йышĕ – 1815, сурăхсен – 2524, сыснасен 1235 пуçа çитнĕ. Çитес çул валли нумай çул ÿсекен курăк вăрлăхĕ, тĕш тырă, пахча çимĕç тата çĕрулми вăрлăхĕ 95,2 тонна туяннă.

Канаш районĕнчи Янкăлчра пурăнакан Верăпа Валерий Никоновсем те ачисем çитĕнсен тăван çĕртен сивĕнмессе шанса хушма хуçалăхри лаптăка пысăклатнă, выльăх шутне ÿстернĕ. Ывăлĕсенчен пĕри Алексей çартан таврăннă ĕнтĕ, ялта тĕпленсе пурăнас шухăшлă. Валерий Смирнов /Елчĕк районĕ/, Денис Харитонов /Çĕмĕрле районĕ/, Александр Афанасьев /Муркаш районĕ/ фермерсен те ĕç опычĕ пысăк.

2015 çулта ХФХ юхăмне аталантарма федераци хыснинчен – 39 млн ытларах, республика бюджетĕнчен 16,3 млн тенкĕ уйăрма пăхнă. Çак укçапа ĕçе тытăнакан 53 фермера хавхалантарĕç.

■ **Валентин ГРИГОРЬЕВ**

✓ ВИÇĔ ÇУЛТА ЯТАРЛĂ ПРОГРАММĂСЕМПЕ КИЛĔШÎЛЛĔН РЕСПУБЛИКĂРА ĔÇЕ ПУÇĂНАКАН 151 ФЕРМЕР ТАТА ВЫЛЬĂХ ПĂХАКАН 16 ÇЕМЬЕ ФЕРМИ ХĂЙСЕНЕ ЯТРАН ПАРАКАН ГРАНТА ТИВĔÇНĔ

КАНАШЛУ

Общежитире пурăннăшăн тÿлемелли хак

Студентсем общежитире пурăннăшăн тÿлессипе çыхăннă хальхи вăхăтри лару-тăрăва «Пĕрлĕхлĕ Раççей» политика партийĕн ĕçтăвком тĕп комитечĕ видеоконференци мелĕпе ирттернĕ селектор канашлăвĕнче тишкерчĕç. Унта Чăваш Енрен те хутшăнчĕç.

Аса илтеретпĕр: 2013 çулта РФ «Вĕренÿ çинчен» çĕнĕ саккунĕ вăя кĕрсен Раççейри вĕренÿ заведенийĕсенчен чылайăшĕ студентсен общежитийĕнче пурăннăшăн тÿлемелли хака малтанхинчен чылай ÿстерсе янăччĕ. Паллах, çакă вĕренекен çамрăксемпе вĕсен ашшĕ-амăшне питĕ кăмăлсăрлантарчĕ. Хăш-пĕр общежитире уйăхра 7 пин тенкĕ таранах тÿлеме тивнĕ – ку кама килĕштĕр? Хаксене çăлтавсăрах ÿстерни пирки хыпарсем çитме пуçланăран «Пĕрлĕхлĕ Раççей» парти ĕç ушкăнĕ йĕркеленĕ, унăн йышне депутатсем, профиль министерство-ведомство представителĕсем, студентсем кĕнĕ. Ĕç ушкăнĕ общежитисенчи условисене, хаксене тĕрĕслесех тăрать. Асăннă йыш студентсене хÿтĕлекен саккун хатĕрленĕ, вăл кăçалхи сентябрĕн 1-мĕшĕнчен вăя кĕнĕ.

Селектор канашлăвĕнче «Пĕрлĕхлĕ Раççей» партин Тĕп канашĕн Президиумĕн членĕ, РФ Патшалăх Думин Вĕренÿ енĕпе ĕçлекен комитечĕн председателĕн заместителĕ Алена Аршинова ĕç ушкăнĕ ирттернĕ мониторингăн пĕрремĕш тапхăрĕ çинчен каласа кăтартрĕ. Аслă шкулсен общежитийĕсенче пурăннăшăн тÿлемелли хака сăлтавсăрах ÿстерсе янă тĕслĕх хальхи вăхăтра сахалланнине пĕлтерчĕ вăл, «Вĕренÿ çинчен» саккуна тата Пурăнмалли çуртйĕр кодексне улшăнусем кĕртнĕ хыççăн хака палăртмалли формула пуриншĕн те ăнланмалла пулнине палăртрĕ. РФ Правительстви 2014 çулхи ноябрĕн 14-мĕшĕнче 1190 №-лĕ Постановлени кăларнă. Унта вĕренÿ учрежденийĕсен общежитийĕнче пурăнакансен коммуналлă пулăшусемшĕн тÿлемелли хака палăртмалли правилăсем çинчен каланă, электроэнергишĕн тÿленĕ чухне хакăн 0,9-тан ытла мар, ăшăшăн – 0,5-рен ытла мар, коммуналлă ытти пулăшушăн 1-рен пысăк мар коэффициенчĕпе усă курмаллине асăннă ку документра.

Селектор канашлăвĕнче РФ Вĕренÿпе наука министерствин финанс департаменчĕн директорĕ Михаил Алашкевич Правительство постановленийĕпе килĕшÿллĕн коммуналлă пулăшусемшĕн тÿлеме патшалăх паракан укçана пĕтĕмĕшле хакран кăлармаллине аса илтерчĕ. «Пĕрле усă куракан лаптăксемшĕн те студентсен тÿлеме тивмĕ», – терĕ вăл.

Çапах общежити хакĕсемпе çыхăннă лару-тăру йĕркеллĕ теме иртерех-ха. Алена Аршинова регионсенчи аслă шкулсен ертÿçисене студентсем койка-вырăншăн мĕн чухлĕ тÿленине пĕлтерме ыйтса çыру янине, хăшĕ-пĕринчен халĕ те хурав кĕтсе илейменнине палăртрĕ. Хаксем те тĕрлĕрен: пĕрисенче – уйăхне 100-150 тенкĕ, çав хушăрах 2 пин тенкĕ ытла ыйтаканнисем те пур. Алена Игоревнăна контрактпа вĕренекенсене общежитире пурăннăшăн бюджет шучĕпе ăс пухакансенчен темиçе хут ытларах тÿлеттерме йышăнни те тĕлĕнтерет. Ыйтусем татах та пур. Вĕсене уçăмлатас тĕллевпех «Пĕрлĕхлĕ Раççей» парти студентсен общежитийĕсенче черетлĕ мониторинг ирттерес шутлă. Ăна 2015 çулхи февралĕн 9-мĕшĕччен вĕçлемелле. «Студентсен хăйсен те пуçарулăх кăтартмалла, лару-тăрупа интересленсех тăмалла», – пĕтĕмлетрĕç селектор канашлăвне хутшăннисем.

Пирĕн республикăра мĕнлерех-ха ку тĕлĕшпе лару-тăру? ЧР Вĕренÿ министерствин професси вĕренĕвĕпе наука уйрăмĕн пуçлăхĕ Александр Атамов пĕлтернĕ тăрăх – мониторинг кăтартăвĕсем Чăваш Енри аслă шкулсем пурте РФ Правительствин Постановленийĕпе тата РФ Вĕренÿпе наука министерствин хушăвĕпе килĕшÿллĕн ĕçленине çирĕплетеççĕ. Пĕтĕм информацие вĕренÿ заведенийĕсен сайчĕсенче вырнаçтараççĕ. «Хаксем кашни общежитире тĕрлĕ: 150 тенкĕрен пуçласа 500 тенкĕ таран. Пурăннăшăн тата коммуналлă тăкаксемшĕн», – терĕ А.Атамов. Вăл бюджет шучĕпе вĕренекенсен те, пĕлĕвне укçа тÿлесе тарăнлатакан студентсен те общежитишĕн пĕрешкелех тÿлемелли пирки йышăну пулнине систерчĕ.

«Пĕрлĕхлĕ Раççей» партин регионри ĕçтăвком комитечĕн ертÿçи Алексей Гурьев регион уйрăмĕ хăй те мониторинг ирттернине палăртрĕ, общежитире пурăннăшăн тÿлемелли хака сăлтавсăр ÿстерсе янă тĕслĕх Чăваш Енре пулманнине, ку енĕпе студентсемпе вĕсен ашшĕ-амăшĕнчен пĕр çăхав-шалăп та килменнине асăнчĕ, ку ыйтăва малашне те тĕрĕслесех тăрассине пĕлтерчĕ.

■ **Ирина КЛЕМЕНТЬЕВА**

БРИФИНГ

Техникăна газпа ĕçлеттерни перекетлĕрех

ЧР транспортпа çул-йĕр хуçалăхĕн министрĕ Владимир Филиппов иртнĕ эрнере Правительство çуртĕнче журналистсен ыйтăвĕсене хуравларĕ.

Раççей Правительствин 2013 çулхи майăн 13-мĕшĕнчи «Мотор топливи вырăнне çутçанталăк газĕпе ытларах усă курасси çинчен» хушăвне пурнăçласа 300 пин ытла çын пурăнакан хулари пассажирсем турттаракан автотранспортăн тата коммуналлă хуçалăх техникин – 30% яхăн, 100 пин ытла çын пурăнакан хулари асăннă хатĕрсен 10% яхăн 2020 çулччен çутçанталăк газĕпе ĕçлеттермеллине пĕлтерчĕ.

«Республикăн Министрсен Кабинечĕ те кăçалхи октябрĕн 1-мĕшĕнче çумпрограмма йышăннă, – терĕ Владимир Иванович. – Чăваш Енре 2020 çулччен автомашинăна топливо вырăнне çутçанталăк газĕпе тивĕçтерекен 6 станци хута ямалла, федерацийĕ республика бюджечĕсен уйăрнă тата хысна тулашĕнчи тунă укçапа метанпа çÿрекен 357 машина туянмалла. Раççей Правительстви лартнă тĕллевсене пурнăçласа 2013 çулта «Чăвашавтотранс» патшалăх предприятийĕ валли çавăн йышши 18 автобус туяннă та ĕнтĕ. Тăкакăн – 20% республика бюджечĕ, 80-шне федераци хысни саплаштарнă. Предприяти çулталăкра газпа усă курса кашни автобус пуçне 600 пин тенкĕ перекетлерĕ. Çутçанталăк газĕпе чупакан машинăсемпе техника паркне пуянлатакан организацисемпе предпринимательсене патшалăх налук енĕпе çăмăллăх кÿрет».

Автотранспорт газа бензинран е дизтопливăран 30% нумайрах пĕтерет пулин те перекет питĕ нумай. Специалистсем бензин е дизтопливо транспортне газпа усă курмалла тума сĕнмеççĕ. Тăкакĕ 200 пин тенкĕ майлах кайса ларать. Тÿрех ятарлă транспорт туянмалла.

Паянхи кун шĕветнĕ газпа – 8,5 пин, метанпа техникăн 250 хатĕрĕ, вăл шутра 25-30 автобус /7-10-шĕ уйрăм харпăрлăхçăн/ ĕçлет. Пурĕ 3285 автобус шута илнĕ. Вĕсен 35-37% газ тултарать, ытти дизтопливăпа усă курать, бензин çунтараканни çук.

Водительсем Шупашкартан Çĕнĕ Лапсара кайнă чух çул хĕрринче метанпа тивĕçтерекен станци вырнаçнине пĕлеççĕ. Вăл кашни талăкра техникăн 500 хатĕрне йышăнаять. Метанпа çÿрекенни сахалран кунта асăннă хисепрен 10% çеç кĕрет.

Газ тултаракан компрессор станцийĕсем паян питĕ кирлĕ. метанпа тивĕçтерекеннисене тăвас пирки Чăваш Ен «Газпром газомоторное топливо» обществăпа килĕшÿ çирĕплетнĕ. ЧР Пурлăх тата çĕр хутшăнăвĕсен тата Транспортпа çул-йĕр хуçалăхĕн министерствисем муниципалитетсемпе пĕрле вĕсене вырнаçтарма 16 çĕр лаптăкĕ уйăрас ыйтăва вырăна тухса тишкернĕ. Шел те, 6-шĕ станци тума каймасть. Канаш районĕнче çеç хăш вырăнта пулассине кĕске хушăра уçăмлатнă.

Асăннă общество çав 6 лаптăкра модульлĕ тата стационарлă станци хывма килĕшнĕ. «Малашне ытларах тăвасси пирки шухăшлатпăр, – терĕ В.Филиппов. – Кашни районти автотранспорт газпа усă курма пултартăр. Пассажирсем турттаракан автобуссемпе коммуналлă хуçалăх машинисем çеç мар, ялхуçалăх техники те».

Юлашки çулсенче метан бензинран, дизтопливăран самай йÿнĕрех ларни çинчен нумай калаçаççĕ. АИ-92 бензин вăтамран – 33, Аи-80 маркăлли 28-30 тенкĕ тăрать. Шупашкар çывăхĕнчи станцире кашни кубла метр газа 10,5 тенкĕлле – дизтопливăран 70% йÿнĕрех – сутаççĕ. Министр ÿлĕм ирттерекен конкурссен çĕнтерÿçисен йышне метанпа усă куракан, пассажирсем турттаракан предприятисем машинăсене газпа ĕçлеттермен организацисенчен маларах лекме май пуррине палăртрĕ. Çак йĕркене çирĕплетме пуçару тăвасси пирки каларĕ.

Пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕçе тăсма кăçал федераци хыснинчен – 15 млн, республика бюджетĕнчен 21 млн тенке яхăн уйăрма, килес çул ЧР хыснинчен 30 млн тенкĕ куçарма пăхнă. Йывăр урапа пĕр вырăнтан хускални куçкĕрет. Инвесторсене районсенче станцисем лартма лаптăксем çывăх вăхăтра касса памалла. Предприятисен автотранспорта газпа ĕçлеттермелли тĕллевсем çирĕплетмелле. Çакна тума вĕсене Правительство хушмĕ. Газпа усă курсан кĕсьери укçана перекетлессине халĕ пурте пĕлеççĕ.

■ **Юрий МИХАЙЛОВ**

ХАК

Сĕтшĕн тĕрлĕрен тÿлеççĕ. Мĕншĕн?

Елчĕк районĕнчи килти хуçалăхра темиçе ĕне усракан Петр Васильев «Хыпар» редакцине телефонпа шăнкăравларĕ. Ял çыннисенчен пухакан сĕте мĕн хакпа йышăннине хаçатра вуласа пĕлсе тăраканскер: «Элĕк, Вăрнар, Хĕрлĕ Чутай районĕсемпе танлаштарсан Елчĕк, Шăмăршă, Сĕнтĕрвăрри тăрăхĕсенче пуçтаракансем мĕншĕн йÿнĕрех тÿлеççĕ?» – тесе ыйтрĕ.

ЧР Ялхуçалăх министерстви декабрĕн 12-мĕшĕ тĕлне райадминистрацисенчен илнĕ информаци тăрăх – Елчĕк енри сĕт пуçтаракансем кашни килограма çак хакпа йышăннă: В.П.Смирнов, «Парус» ООО, А.В.Тябуков, «Молочный двор – Канаш» ООО, Т.А.Сорокина, Т.В.Грибова, В.И.Савастьянов, Н.В.Смирнова, Н.В.Максимов, Н.В.Смирнов, А.Р.Казаков, Л.М.Разумова – 18, А.А.Гаврилов, «Санти» – ООО – 18-18,5, «Эмметево», В.Г.Охотина, В.В.Григорьев, «Рассвет» ЯХПК – 19, «Вурнары завод СОМ» - ООО – 18,5-19, В.И.Московский – 15, Н.Л.Кондратьев, В.М.Лисов, «Комбайн» ЯХПК – 18,5 тенкĕлле.

Асăннă кун тĕлне Элĕк, Хĕрлĕ Чутай районĕсенчи продукци пуçтаракан – 13 тата 8 организаци, Вăрнар тăрăхĕнчи юридици тытăмĕн тата уйрăм çыннăн 24 предприятийĕ /3-шĕн хакĕ – 19-20/ кашни литра 20 тенкĕлле йышăннă.

Редакцие телефонпа шăнкăравлакан ыйтăва тĕрĕс лартать. Таблицăран Патăрьел, Канаш, Куславкка, Комсомольски, Сĕнтĕрвăрри, Пăрачкав, Улатăр, Вăрмар, Çĕрпÿ, Шăмăршă, Тăвай районĕсен те Элĕксен, Хĕрлĕ Чутайсен, Вăрнарсен кăтартăвĕнчен пĕчĕкреххине куратпăр.

Хаçат вулакан ыйтăвне Елчĕк райадминистрацийĕн специалисчĕ Ирина Горшкова хуравлать: «Элĕк, Хĕрлĕ Чутай, Вăрнар районĕсенчи, юнашар тăрăхри ялсенчен Вăрнарти типĕ сĕт хатĕрлекен предприятие, Етĕрнери сĕт-çу заводне продукци турттаракансен çулĕ пĕр мар. Елчĕксен продукцине автотранспортпа илсе çитерме темиçе хут нумайрах каяççĕ. Иккĕмĕш сăлтава та шута илме тивет. Пирĕн пуçтарнă продукцие сивĕтмелли пункт çук. Ăна тусан тÿрех заводсене ăсатăпăр. Ĕçе кĕртсен сутлăх хака витĕм кÿме çăмăлрах. Паян Комсомольскинчи, Патăрьелти, Пăвари пунктсене турттараççĕ. Елчĕксен сĕчĕн хакне пирĕн район çыннисем мар, вĕсен харпăрлăхçисем палăртаççĕ. Çавăнпа вĕсене витĕм кÿме ÿывăр.

– Республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев килти хуçалăхсенчен пухакан сĕт пахалăхне ÿстерме чĕнсе каларĕ. «Çак тĕллеве пурнăçласан çеç продукци тупăш ытларах парĕ», – терĕ. Кун пирки мĕн калатăр?

– Вырăнти хăйтытăмлăх органĕсенче ĕçлекенсем, ветспециалистсем сĕт пахалăхĕпе çыхăннă ыйтăва кашни информаци кунĕнчех хускатаççĕ. Юлашки çулсенче ку енĕпе ĕç малалла кайрĕ. Килти хуçалăхсенчен нумайăшĕ ĕне сумалли аппарат туяннă, çанталăк ăшă тăнă чух сĕте сивĕтмĕшре тытаççĕ. Продукцие çуркунне-çулла хуçалăхсем те Элĕксемпе, Вăрнарсемпе е Хĕрлĕ Чутайсемпе танлаштарсан сĕтрен сахалрах ĕçлесе илеççĕ. Кашни литртан Г.А.Ахметов – 16, А.Н.Кузьминапа А.М.Сабитов – 16-17, В.А.Васильев – 16,5, Н.М.Авксентьев, Ф.Азизов, Ф.Ф. тата Ф.С.Рахматулловсем, Г.А.Новая – 17, А.А.Степанов, Г.Ильин, Н.Н.Хамидуллов 17,5 тенкĕлле çеç йышăнаççĕ. «Агро-Сервис» ООО – 18,5, Р.Р.Хамидуллина 17-20 тенкĕлле пухаççĕ. Çав вăхăтрах «Агроинфоком» ООО – 26, В.В.Чамеев 23 тенкĕ тÿлеççĕ.

Сĕнтĕрвăрри районĕнчи хак та ял-йыша тивĕçтермест: 17 тенкĕ кăна. Вăрмартинчен пĕр тенкĕ йÿнереххине çул вăрăмĕшĕпе ăнлантармалла мар ĕнтĕ. Вăрмарсем тирпейлекен предприятисенчен инçерех те вырнаçнă. Сĕнтĕрвăрри тăрăхĕнче 3 организаци çеç сĕт пухать. Вĕсен хушшинче конкуренци çукпа пĕрех. Ку – продукцие тивĕçлипе хакламаннин тĕп сăлтавĕ.

■ **Юрий МИХАЙЛОВ**

Райадминистрацисенчен пĕлтернĕ тăрăх – декабрĕн 12-мĕшĕ тĕлне килти хуçалăхсенчен сĕтĕн кашни литрне çак хакпа йышăннă: Улатăр – 16-17, Элĕк, Хĕрлĕ Чутай – 20, Патăрьел – 17-19, Вăрнар – 19-20, Йĕпреç, Канаш, Çĕмĕрле, Шупашкар районĕ – 18-20, Куславкка – 18,3-19, Комсомольски – 17,5-19, Сĕнтĕрвăрри – 17, Муркаш, Етĕрне, Красноармейски – 19, Пăрачкав, Çĕрпÿ – 18-19, Шăмăршă – 16-26, Елчĕк – 15-19, Тăвай, Вăрмар – 18 тенкĕ.

ПУРНĂÇ КУКРИ

«Итлĕр-ха, эпĕ чăлах мар вĕт...»

Пирĕн корреспондент тĕп хулара ĕç шыранă

Ситет... Ситет тĕнче касса çÿресе. Мускавра монолит çуртсем хăпартрăм, Чулхулара ача сачĕ купаларăм, Инçет Çурçĕрти Ямалта çул турăм. Ютра пилĕк авма, чура вырăнĕнче туйма çаплах çирĕмри яш мар, аллăран иртнĕ, мăнуксем «асатте» тени килтех юлма хистет.

Çапах ĕçсĕр ларас килместха. Ÿркенменнисемшĕн кирек ăçта та ĕç пур. Интернета кĕтĕм те – шалт тĕлĕнтĕм. Ĕçсĕрлĕх ыйтăвне сÿтсе явман кун çук: чăвашра 19 пин /!/ ваканси сĕнеççĕ. Паллах, хушса кăна лармалли вырăнсене йышăнса пĕтернĕ, пурнăçа пирĕн пек ăнтарайман айвансене стройкăсенче кĕтеççĕ, çÿп-çап шăлакан таçта та кирлĕ. Ленин комсомолĕн, 324-мĕш дивизийĕн, Шумилов урамĕсенчи çуртсене «Пик-1» компани тасатса тăрать-мĕн. Кантура кĕриччен çавăнта тăрмашакансемпе курса каласас терĕм.

Ленин комсомолĕн урамĕнчи 40-мĕш çурта Галя текен хĕрарăм тирпейлет. Пенсире пулас.

– Вăй патăр, – тетĕп ăна.

– Сире те çавнах сунатăп. Эс, ачам, çак ĕçе пуçа миксе намăс ан курах. Карчăк-кĕрчĕк упалентĕр, ав кÿршĕ подъездсене Настя аппа шăлать. Çитмĕлтен иртнĕскерĕн вăйхалĕ ăçтан тухать-ши тесе тĕлĕнетĕп. Чим-ха, ман подъездран тепĕр йĕкехÿре сиксе тухрĕ, ы-ых, каттăршнăй, – чул катки вăркăнтарчĕ хĕрарăм.

Йĕкехÿри ним пулман пекех ун-кун пăхкаласа ларать. Алăкран тухакансене палласа çитнĕ, лешсем те ăна сывлăх сунмашăн çеç.

– Сирĕн бригадира курма пулать-ши? – тĕпчетĕп хайхи.

– Тамарăна-и? Эрнерен урăлса çитет пулĕ, халь запойра. Кантурта унăн йăлтах палланисем, çавăнпа тытса тăраççĕ. Урă чухне питĕ йăрă бригадир, пĕр черкке ÿпĕнтерсен кайрĕ вара...

Мĕн каласси пур, эрех ыр тумасть ĕнтĕ. Хамран илсе калатăп. Юрĕ, саккăрмĕш теçетке çула пуснисем çÿп-çап карçинккисене çĕклеме хевте çитереççĕ тĕк аллăрисем кĕрĕк арки йăвалани пĕртте килĕшÿллĕ мар. Çула май «Шупашкар» пасара хирĕç вырнаçнă çăкăр заводне кĕрсе пăхас. Кадрсен пайĕнче питĕ тарават кĕтсе илчĕç.

– Грузчике вырнаçасшăн апла, мастерпа калаçса пăхмалла. Чим-ха, ăнсăртран 3-мĕш ушкăн инваличĕ мар-и?

– Ăнланмарăм, эп чăлах мар, ăс-тăн йĕркеллех, ал-ура ĕçлет.

– Пĕлетĕр-и, «çÿлтен» инвалидсене ĕçе илмелли разнарядка антарчĕç...

Разнарядка... Çăкăр техĕмĕ мар, Совет саманин шăрши çапрĕ кунта. Грузчике илмерĕç, хам пурăнакан çуртран 100 метрта вырнаçнă «Лента» гипермаркета кайса килес. Вăт ку – паянхи саманара суту тумалли капмар та тем пысăкăш çуртсенчен пĕри. Тавар туянакансем пĕр харăсах 20 касса аппарачĕ витĕр тухнине ăçта курнă эсир. Унашкалли чăваш хутлăхĕнче урăх çук. Çитменнине, талăкĕпех ĕçлет. Нухратлисем чаплă машинăсемпе вĕçтерсе килеççĕ, апатçимĕçне хутаçпа çĕклемеççĕ, ятарлă урапасемпе тĕксе тухаççĕ. Урапа пушаннă хыççăн вăл çавăнтах ларса юлать. Шăп çавсене пуçтарса вырăна кайса лартакансем кирлине илтнĕччĕ. Хуть кăнтăр çутипе ĕçле, хуть – сĕм çĕрле.

Кадрсен пайне кĕртмерĕç. «Ав, шалти çыхăну телефонĕпе шăнкăравлăр», – терĕç хуралçăсем. Тем самантран унтан пĕр тăпăлкка хĕр анчĕ.

– Анкетăри ыйтусене хуравларăр-и? Санитари кĕнеки пур-и сирĕн?

– Каçарăр та, кунĕпе урапа тĕксе çÿрекенсен те санитари кĕнеки тутармалла-и?

Хулан кăнтăр хĕвеланăç районĕнчи Матэ Залка урамĕнчи суту-илÿ çуртĕнче пахча çимĕç уйрăмĕ уçăлнă та, вĕсен хучĕсене çывăхри çуртсенче пурăнакансем патне çитермелле иккен.

«Пирĕн патра йÿнĕрех» – пысăкрах саспаллисемпех çырнă хут листисене. Типографире пичетленĕ пулас. Сентресене пăхса çаврăнтăм та таварĕ чăнах та йÿнĕрех вĕсен. Анчах çын питех курăнмасть. Тен, пахчаçимĕç уйрăмĕ уçăлнине пĕлмеççĕ те. Хăнăхнипе «Пятерочка», «Магнит» супермаркетсене уттаратпăр-çке.

– Ак сана микрорайон картти, çуртсене арпаштарса ан яр, кашни подъезда кĕмелле, чееленме хăтлансан пĕр пус та тÿлеместпĕр. Ăçта кĕрсе тухнине уйрăм çын тĕрĕслет пирĕн, – теплицăра ÿстернĕ хăяра аса илтерекен тăсланкă йĕкĕт мана пир сумка тыттарчĕ, унта 1000 /!/ листовка хунă. Çилĕмĕ те пур, подъезд алăкĕ çумĕнчи хăма çине çыпăçтарма, ахăртнех. Кунĕпе çÿрерĕм. Матэ Залка, Чернышевский урамĕсенчи нумай хутлă çуртсенче халăх еплерех пурăннине сăнарăм. Çуртпа çурт пĕр мар иккен. Пĕр çуртри подъездсем те тасалăхĕпе пĕр-пĕринчен уйрăлса тăраççĕ. Çÿп-çап шăлакансене вăрçни кăлăхах. Хамăрах варахăш-пĕр подъезда вуçех кĕмен. Тĕттĕмленет ĕнтĕ, ыран ĕçе вĕçлемелле, вара укçа пулать.

– Ман çул укçи те çук...

– Çул укçине парăп, ыран килмелĕх те. Выçă çÿрерĕн-и? Валя, çавăнта виçĕ купăста кукăлĕ пурччĕ, чей лартса яр, тархасшăн.

Хут пăрахса çÿренипе пайтине кураймăн. Тахăш çуртра пĕр ĕçкĕçпе пырса çапăнтăмăр та чĕрре кĕме хăтланчĕ: «Манăн почта ешчĕкне 100 тенкĕлĕххине вăркăнтар, вара çул паратăп. Ют территорие кĕмелли ирĕк пур-и сан?» Лифтран çынсем тухсан тин манран хăпрĕ.

Тен, пĕр шутласан, лăпкăрах çĕре – хурала вырнаçмалла? Темиçе телефон çырса хунăччĕ. Лицензисĕр илме килĕшмеççĕ. Юлташ ырă сĕнÿ пачĕ. Малтан ĕçпе тивĕçтерекен центра кайса учета тăмалла. Унта хăвна лайăх енчен кăтартсан хуралçăсене хатĕрлекен центрта хысна шучĕпе вĕренме май пур-мĕн. Лицензи илсен çул уçăлать пек, çапах пенси çулне çывхарнисене пурте хапăл тумаççĕ-тĕр. Мускавра та, Шупашкарта та çавах.

Киле çитсен ывăл каласа пани кăмăла кăштах çĕклерĕ. Ĕç пирки пĕр банк çыннисемпе тĕл пулнă, лешсем 28 пин тенкĕ шалу шантарнă. Ĕçне кура вăл çур çултан ÿсет иккен. Мĕнех, 25-30 çулсенчи йĕкĕтсен малашлăх пур пулас. Пирĕн, сÿнме пуçланă çуртана аса илтерекенсен, мĕн ыррине кĕтмелле-ши?

Пирвайхи шырав-çÿрев ăнăçсăр пулнишĕн йĕпе юр пусăмĕпе аваннă хăрăк турат евĕр пуçа усас марччĕ пирĕн. Ĕçĕ таçта та пур – хулара та, ялта та. Диван сыхласа вырт-нипе çăкăр пĕлĕтрен татăлса анмĕ. Шел, хальхи çамрăксем рабочи специальноçĕнчен сивĕнчĕç. Аван тÿлекен предприятисем çук-им пирĕн. Акă атă-пушмак кăларакан «Яхтинг» компани рабочисене уйăхне вăтамран 20-25 пин тенкĕ тÿлет. «Сварка» фирмăра та шалу унран кая мар. Шапашкăра ĕçлекенсем пысăк укçапа таврăнни сайра хутра. Вырăнтах ĕç тупнине мĕн çиттĕр. Кунта – çемье, атте-анне, тăван-пĕтен, ачапăча...

■ **Григорий СЛАВИН**

✓ МĔНЕХ, 25-30 ÇУЛСЕНЧИ ЙĔКĔТСЕН МАЛАШЛĂХ ПУР ТЕЙĔПĔР. ПИРĔН, СÿНМЕ ПУÇЛАНĂ ÇУРТАНА АСА ИЛТЕРЕКЕНСЕН, ЫРРИНЕ КĔТМЕЛЛИ ЮЛНĂ-ШИ?

ФРОНТРАН ЯНĂ ÇЫРУСЕМ

«Паян сывă-ха, ыран мĕн пулассине пĕлместĕп...»



Аллăмра – 70 çул ытла каялла çырнă çырусем. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинчен янăскерсем. Вĕсем пурте тăван ялăмра – Елчĕк районĕнчи Яманчÿреленче – çуралса ÿснĕ Артем Базарнов çырнăскерсем. Эпĕ курман ăна. Вăл ялтан Тăван çĕршыва хÿтĕлеме тухса кайнă çĕр ытла ентешрен çуррине яхăн каялла таврăнайманнисен йышĕнче.

Артем Базарнов 1916 çулта çуралнă. Елчĕк районĕн çар комиссариачĕ ăна çара ăсатнă. Сержант. 1942 çулхи августăн 4-мĕшĕнче Тверь облаçĕнчи Зубцовское районĕнчи Погорелое Городище ялшăн пынă çапăçура вилнĕ.

Салтакăн çырăвĕсем ывăлĕн Базарнов Иван Артемовичăн килĕнче упраннă. Ялти библиотека ертÿçи Ираида Ермакова, Аслă Çĕнтерĕвĕн черетлĕ юбилейне халалланă мероприятисем ирттерме хатĕрленнĕскер, вĕсене вулавăша илсе пынă. Вăхăт иртсен Иван Артемович ашшĕпе çыхăнтаракан çырусене каялла илсе кайнă, вĕсемпе сывпуллашас темен. Çапах та тем вăхăтран библиотекăна хăех тавăрса панă: "Кунта шанчăклăрах, яланлăхах упранăç",– тенĕ. Йăнăшман. Иван Базарнов та текех çук ĕнтĕ пирĕн хушăмăрта.

Ашшĕн çырăвĕсем вара... Вĕсем ывăлне пĕлнĕ çынсене çеç мар, пĕтĕм ял-йыша, çитĕнекен ăрава тата пуласлăхрисене те кăсăклантарĕç.

Фронтран янă пилĕк çыру упранса юлнă. Паллах, ытларах чухне вĕсене меллĕ самантпа усă курса, çапăçу хирĕнче шăпланнă вăхăтра шăрçаланă ĕнтĕ. Çырусем тăрăх Артем Данилович сăмах ваклама юратакан, ял-йыш, хуçалăх пурнăçĕпе кăсăкланакан çын пулни паллă. Хăй вăрçа тухса кайсан кун çути курнă ывăлне ачашласа ÿстерме ĕмĕтленнĕ. Ун пирки тата ытти çинчен ентешĕмĕрĕн çырăвĕсене вуланă май тĕплĕнрех пĕлĕпĕр.

Паллашар-ха эппин вĕсемпе.

"Çыру

1942-мĕш çулти апрелĕн 23-мĕшĕнче ырă куна ырласа, шурă хута хуратса, атте сана чунтан-вартан юратса питĕ пысăк командирски хĕрÿллĕ салам яратăп, ырлăхпа-сывлăхпа пурăнма сунатăп.../Çак сăмахсенех амăшĕ, мăшăрĕ Надиш, хĕрĕ Лидия, кÿршĕ-аршă, çавăн çывăх тăванĕсен ячĕпе те çырнă – Авт./.

Хамăн пурнăç пирки çырса пĕлтерем-ха: 1942 çулхи апрелĕн 13-мĕшĕнче вăрçа кĕтĕмĕр, нимĕçсене хăваларамăр. Пульăсем шултăра çумăр çунă пек шăхăрчĕç. Самолетсенчен вĕçĕмсĕр бомба пăрахрĕç. Çапах та çапăçуран ăнăçлă тухрăмăр, пĕрин урине çеç осколка амантрĕ. Манăнне те сулахай пĕçĕри шăлавара, пуçри çĕлĕке шăтарса кайнăччĕ, анчах çăкăр çимелĕх тата пурăнмалăх кунăм вĕçленмен иккен-ха. Халĕ канма илсе тухрĕç...Лидана аван пăхăр, ан хĕнĕр, апата вакăвакă çиет тесе ан вăрçăр. Анне, эсĕ ăна выляма илсе кай, çавăтсах çÿре, шыва е пусса ан кайтăр. Сантали е пушмак çĕлетсе парăр, çĕтĕк ан çÿретĕр. Лида, маттур хĕрĕм, аван ÿс.

Тата çакна та çырам-ха. Май уйăхĕнче Надиш çăмăлланмалла. Чипер çăмăллансан кĕçчина тăвăр. Сăра е эрех туса хурăр, пасар эрехĕ пĕр четвĕрт çитет, сăра 7-8 витре вĕрететĕр пуль. Çуллахи кун юр-варне укçалла илмелле мар. Хунчăкăм арăмне, инкене, Альшихри кукамая чĕнĕр. Атте, астăватăн пуль: хамăр кайса ĕçсе çинĕччĕ... Сиртен çыру чăтăмсăррăн кĕтетĕп.

23.04.42 çул".

* * *

"Ырă куна ырласа çыратăп çыру. Пурне те, çав шутра пĕчĕккине те, командирский хĕрÿллĕ салам яратăп.

Атте-анне, Надиш, Лида хĕрĕм, мĕнле пурăнатăр? Сире мĕнле йывăр пулсан та хальхи вăхăтра пырса пулăшаймастăп. Ку тарана çитсе те сиртен çыру илеймерĕм. Пурнăçра тем те пулнă: вăрçаннă та, кÿрентернĕ те пулĕ. Каçарăр.

Хамăн хыпара çырса пĕлтерем: вăрçа урăх кĕмен-ха, канатпăр.

Колхозра кам мĕнле вырăнта ĕçлет? Камкам çара кайнă? Йăлтах çырса ярăр. Улма акрăра, шăтăкран кăлартăра? Колхозран миçе пăт тырă илтĕр? Хăш бригадăра ĕçлетĕр? Çырса ярăр.

11.06.1942 çул".

* * *

"Çыру.

1942-мĕш çулхи июлĕн 26-мĕшĕнче çыратăп çыру шурă хута хуратса. Халĕ манăн Ванькка пур. Эпĕ ăна курман та-ха. Çемйипех сăн ÿкерттерсе ярса парăр. Инкесене те, эртельтисене те, колхозра ĕçлекенсене те, ял-йыша та, пурне те манран, Базарнов Артемий Данилович сержантран, командирский хĕрÿллĕ салам.

Атте, анне, Надиш, Лидапа Ванькка аван пăхăр. Çиес çăкăр пулсан эпĕ таврăнатăпах, ун чухне питĕ аван пурăнăпăр... Килти, ялти хыпара веçех çырса ярăр. Надиш, аттепе аннене сума су. Сывă пулăр. Алă тытас вырăнне алă пусатăп: Базарнов".

Тата икĕ çырăвне хăçан çырнине палăртаймарăм. Пĕри, кăранташпа çырнăран, сăтăранса пĕтнĕ тата ытла та кĕске. Васканă курăнать. Çак йĕркесене çеç вулама пултартăм:" Килти хыпара нимĕн те пĕлместĕп. Çырса ярăр. Эпĕ паян сывă-ха, ыран мĕн пулассине пĕлместĕп..."

Пичете Надежда СМИРНОВА хатĕрленĕ.

КОРРУПЦИ

Намăссăр!

Шупашкарти Мускав районĕн сучĕ тĕп хулари «Ритуаллă пулăшу ĕçĕсем» МУП директорĕн пĕтĕмĕшле ыйтусемпе ĕçлекен заместителĕ 30 çулти Евгений Владимиров тĕлĕшпе пуçарнă уголовлă ĕçпе приговор палăртнă. Ăна ултавшăн тата коммерци енĕпе сутăннăшăн айăпланă.

Раççей саккунĕпе килĕшÿллĕн çĕршывра кашни çынна вилсен пытарма тÿлевсĕр çĕр лаптăкĕпе тивĕçтерессине гарантиленĕ. Çакна тата Шупашкар хула администрацийĕн йышăнăвĕпе килĕшÿллĕн тĕп хулари 5-мĕш масарта вилнисене пытарма чарнине пĕлнĕ пулин те Владимиров çынсене хăйĕн хупă масарта вилнисене пытармалли полномочисем пурри пирки улталанă. Çакăншăн укçа кăна тÿлемелле. Çавна май вăл икĕ хĕрарăмран вĕсен вилнĕ тăванĕсем валли лаптăксем уйăрнăшăн 40 пин тенкĕ илнĕ. Укçана хăйĕн кĕсйине чикнĕ.

Унсăр пуçне Владимиров муниципалитет предприятийĕ «Металлид» ОООпа килĕшÿ туса ĕçленине пĕлнĕ. Асăннă фирма «Ритуаллă пулăшу ĕçĕсене» вил тăпри тавра тытакан картасемпе тивĕçтернĕ. Çав картасемшĕн вăхăтра укçа куçарма тата малашне те çыхăну тытса ĕçлемешкĕн шантарса вăл «Металлид» гендиректорĕнчен маларах туяннă кашни карташăн пĕрер пин тенкĕ укçа саккуна пăсса илнĕ. Пĕтĕмпе – 190 пин тенкĕ.

Суд Владимирова Уголовлă кодексăн икĕ статйипе айăпласа 3 çул та 6 уйăхлăха пĕтĕмĕшле режимлă колоние ăсатма, 1,9 млн тенкĕлĕх штрафлама йышăннă.

■ **Сергей ПАВЛОВ,**
ЧР прокуратурин коррупцие хирĕç саккунсене пурнăçлассине сăнаса тăракан пайĕн пуçлăхĕ

Волков каллех суд умне тăнă

Канаш районĕн сучĕ хăй вăхăтĕнче Чăваш патшалăх университечĕн Канашри филиалне ертсе пынă Борис Волкова каллех айăпланă. Ку хутĕнче те – взятка илнĕшĕн, должноç полномочийĕсемпе киревсĕр тĕллевпе усă курнăшăн.

Уголовлă ĕçе Следстви комитечĕн Канашри пайĕ тĕпченĕ. Следстви тата суд çирĕплетнĕ тăрăх – 2012-2013 çулсенче Волков хăй ертсе пыракан филиалăн çичĕ студенткинчен саккуна пăсса укçа илнĕ – пĕтĕмпе 98 пин тенкĕ. Паллах, çамрăксем ăна çапла ытахальтен «хавхалантарман», ку студенткăсемшĕн аслă шкула ăнăçлă вĕçлемелли услови пулнă. Директор пĕрин зачеткине пĕлĕве тĕрĕслемесĕрех икĕ предметпа зачет тытнине ĕнентерекен паллăсем лартса панă. Улттăшне диплом уменхи практика отчечĕсене хатĕрлеме пулăшнă – чăннипе практикăра пулмасăрах.

Çийĕнчен çиччĕшне те вуза пĕтернĕ чухне çыракан квалификаци ĕçĕсене хатĕрлеме пулăшнă. Тепĕр тесен мĕн пулăшни ĕнтĕ – унччен вĕренсе тухнă çамрăксен диплом ĕçĕсен копийĕсене кăна панă. Директор çапла «тĕрев панине» кура хĕрсем çав ĕçсене университетăн аттестаци комиссийĕ умĕнче ăнăçлă хÿтĕленĕ. Комисси членĕсем хирĕçлеймен ахăртне: вăйра тăракан нормăсемпе килĕшÿллĕн экземенаторсен пĕр кунра 12-рен ытла мар студент пĕлĕвне тĕрĕслемелле, ку тĕслĕхре вара пĕлтĕрхи январĕн 30-31-мĕшĕсенче 90 /!/ студента диплом ĕçĕсене хÿтĕлеттерме пултарнă.

Суд Волкова 3,5 млн тенкĕлĕх штрафлама йышăннă. Çавăн пекех филиалăн экс-директорĕн 3,5 çул преподавательте ĕçлеме юрамасть.

Палăртса хăварни вырăнлă: саккунлă вăя кĕрсе ĕлкĕреймен çак приговор – унченхи айăплавпа пĕтĕçтерсе палăртнăскер. Аса илтерер: кăçалхи апрельте те Волкова взяткăшăн, должноç полномочийĕсемпе киревсĕр тĕллевпе усă курнăшăн айăпланăччĕ. Ун чухне студентсенчен зачетсемпе экзаменсемшĕн, диплом ĕçĕсемшĕн вăл 400 пин тенкĕ ытла «хырçă» пухнине палăртнăччĕ.

■ **Н.КОНОВАЛОВ**

ЯВАПЛĂХ

Шерне пулăшас темен...

Çак инкек çулталăк каялла, пĕлтĕрхи ноябрĕн 25-мĕшĕнче, Тăвайра пулнă. Халь тинех приговор та паллă – Вăрмар районĕн сучĕ 29 çулти Леонид Шернене 2 çул та 2 уйăхлăха колони-поселение ăсатма йышăнчĕ.

21 сехет тĕлнелле райцентрпа пынă май Шерне автомобиль хăвăртлăхне юранинчен ÿстернĕ. Çулпа утакан хĕрарăма асăрхасан та хăвăртлăха чакарман, чарăнман. Çуран çынна таптаса йывăр амантнă. Чарăнса пулăшмалла пулнă ĕнтĕ – çынна вилĕмрен çăлса хăваратчĕ пуль, анчах водитель çапла туман, вырăнтан пăрахса тарнă.

Кăштахран çак вырăнтан тепĕр çын иртнĕ. Çул çинчи пластмасса ванчăкĕсене асăрхаса чарăннă. Машинăран тухсан çул айккинче выртакан хĕрарăма асăрханă. Ун чухне вăл сывланă-ха. Арçын полиция шăнкăравланă, васкавлă медпулăшу чĕннĕ. Шел, йывăр аманнăскере больницăна илсе кайнă пулин те пурнăçне çăлса хăварма май килмен – хĕрарăм пĕр ярнерен сывлама пăрахнă.

Следстви вăхăтĕнче, судра Шерне хăйĕн айăпне йышăннă. Хĕрарăма таптанă хыççăн унтан пăрахса тарнине хăраса ÿкнĕрен çапла тунине ăнлантарнă. Анчах ку, паллах, ăна тÿрре кăлармасть. Приговор, тен, хаяртарах та пулатчĕ пуль, анчах суд вăл ÿкĕннине, шар курнисене кÿнĕ сиене саплаштарса укçа тÿленине шута илчĕ.

■ **Оксана ЯСТРЕБОВА,**
Тăвай районĕн прокурорĕ

«Улми» депутатран аякка ÿкмест

Следстви комитечĕн Канашри пайĕ Патăрьел районĕнчи Каншел ялĕнчи 60 çулти арçын тата унăн 33-ри ывăлĕ тĕлĕшпе Уголовлă кодексăн 116 статйипе пуçарнă уголовлă ĕçе тĕпчесе пĕтернĕ. Вак-тĕвек теме те пулатчĕтĕр, анчах асли – вырăнти коммерци организацийĕн гендиректорĕ тата районăн Пухăвĕн депутачĕ...

Следстви версийĕпе килĕшÿллĕн кăçалхи июнĕн 8-мĕшĕнче 16 сехет тĕлнелле Патăрьел районĕнчи Сител ялĕ хĕрринчи пĕве патне çак ялта пурăнакансем Мускав облаçĕнчи тăванĕсемпе пĕрле пынă. Кăштахран вара вĕсем патне хайхи гендиректорпа ывăлĕ çывхарнă, ку территорирен кайма хистенĕ. Пĕве патне пымалли çул хупă, кунта çÿреме юрамасть имĕш. Лешсем хирĕçленĕ те – пуçтахсем Мускав облаçĕн чухне вăл сывланă-ха. Арçын полиция шăнкăравланă, васкавлă медпулăшу чĕннĕ. Шел, йывăр аманнăскере больницăна илсе кайнă пулин те пурнăçне çăлса хăварма май килмен – хĕрарăм пĕр ярнерен сывлама пăрахнă.

Следстви вăхăтĕнче, судра Шерне хăйĕн айăпне йышăннă. Хĕрарăма таптанă хыççăн унтан пăрахса тарнине хăраса ÿкнĕрен çапла тунине ăнлантарнă. Анчах ку, паллах, ăна тÿрре кăлармасть. Приговор, тен, хаяртарах та пулатчĕ пуль, анчах суд вăл ÿкĕннине, шар курнисене кÿнĕ сиене саплаштарса укçа тÿленине шута илчĕ.

■ **Оксана ЯСТРЕБОВА,**
Тăвай районĕн прокурорĕ

«Çутă хула» сиене саплаштарнă

Пăрăх çурăлнă та – Çĕнĕ Шупашкарти нумай хваттерлĕ çурт путвалĕнчи пÿлĕме шыв илнĕ. Хуçи макăрса ларман – айăплине укçан явап тыттарас тенĕ.

Хĕрарăм малтан хăйĕн укçипе юсав ĕçĕсене пурнăçланă, сиенленнĕ пурлăха çĕнетнĕ, унтан вара «Çутă хула» ООО тĕлĕшпе суда тавăç тăратнă. Çак компани асăннă çуртри пĕрлехи пурлăха тытса тăрассишĕн яваплă. Апла тăк шыв пăрăхĕн юсавлăхне те унăнах тивĕçтермелле пулнă. Вăл хăйĕн тивĕçне кирлĕ пек пурнăçламаннипе пăрăх çурăлнă, пÿлĕме шыв илнĕ вĕт.

Суд сиен виçине палăртнă – 105 пин тенке яхăн. Суд приставĕ çак йышăнăва пилĕк кунра пурнăçламалли производство пуçарнă. «Çутă хула» ку требование пурнăçламан та – пристав унăн банкри шучĕ çинчи укçана арестлеме, çавăн пекех суд йышăнăвне пурнăçламалли «исполнительский сбор» текен тÿлеве /10 пин тенкĕ/ шыраса илме йышăннă.

Çакăн хыççăн компани ертÿçисем текех кутăнлашман – сиен тÿснĕ хĕрарăма тăкака туллин саплаштарнă.

■ **Н.ДМИТРИЕВ**

Галабурда айăпне йышăннă

Шупашкар районĕн сучĕ «Акашевская» кайăк-кĕшĕк фабрики» ОООн уйрăм «Атлашевская» подразделенийĕн управляющийĕ Вадим Галабурда тĕлĕшпе приговор палăртнă. Ăна налук тÿлемелли укçана пытарса хăварнăшăн УК 199.2 статйипе айăпланă.

Тĕпчев çирĕплетнĕ тăрăх – «Атлашевская» кайăк-кĕшĕк фабрики» агрофирма» ОООн ĕç тăвакан директорĕнче ĕçленĕ май Галабурда предприятин пĕтĕм финанспа хуçалăх ĕçхĕлне ертсе пынă. Пĕлтĕрхи май уйăхĕн вĕçĕнчен тытăнса 2014 çул пуçламăшĕччен вăл предприятин налук парăмĕсене шыраса илмелли укçине, пĕтĕмпе 51 млн яхăн тенке, пытарнине çирĕплетнĕ.

Пуçлăх хăйĕн айăпне туллин йышăннă. Сиене саплаштарнине шута илнĕ май суд ăна 300 пин тенкĕлĕх штрафланă. Чăн та, айăплав саккунлă вăя кĕмен-ха.

■ **К.НИКОЛАЕВ**

Киллти хуçалăх

Çăмарта хуппи – кальци çăлкуçĕ

● Çăмарта хуппине нумайăшĕ пухса пырать, вĕтетнĕ хыççăн сад-пахчана хывма кальципе пуян удобрени вырăнне усă курать. Çĕр йăçек пулсан ку удобрени пушшех те лайăх.

Çăнăх пек пуличчен вĕтетнĕ çăмарта хуппине амăшĕсем диатезпа тата аллергипе чирлĕ ачисене параççĕ. Унри кальцине организм ытти çимĕçрен тата таблеткăран лайăхрах йышăнать. Çапах та сиплен-мешкĕн шурă тĕслĕ çăмарта кирлĕ. Ăна пĕçермелле, хуппине шуратмалла, шалти сийне сăсе илмелле, типĕтмелле, кофе арманĕпе çăнăх пек пуличчен авăртмалла. Çăнăха çĕçĕ вĕçĕпе илсе 2-3 тумлам лимон сĕткенĕпе хутăштармалла. Кун пек хутăша организм питĕ лайăх ирĕлтерет.

● Çăмарта пĕçернĕ шывпа пăлĕмри ăсен-тăран валли усă курма пулать.

Мельхиор е кĕмĕл вилка-кашăка вĕренĕ çак шыва чиксе кăларсан вĕсем малтанхи пекех йăлтăртатса тăрĕç.

Кĕмĕл савăт-сапана ыхра хуппин шĕвекĕпе те тасатма пулать.

● Çăмарта хуппинче помидор калчи те ăстереççĕ. Çак тĕллевпе çăмартана шĕвĕр енчен ватмалла /çăмартипе, паллах, усă курмалла/, хĕррисене тикĕслемелле, пĕрре виççĕмĕш пайĕ чухлĕ тăпра тултармалла. Ун çине асăрханса, пинцетпа 1-2 вăрă хумалла, çиеле çур сантиметр хулăнăш тăпра сапмалла. Çак «куршаксене» çăмарта хумалли картон клеткăсене вырнаçтармалла, 4-5 сантиметр ăссен çăмарта хуппине ватмалла, ăсен-тăрана пысăкрах савăтсене куçарса лартмалла. Çакнашкал калча лайăх чĕрĕлсе каять.

Усăллă канашсем

● Хытăрах какая /ĕне ашне/ хатĕрлеме пуçличчен темиçе сехет маларах горчица çăнăхĕпе сăтăрмалла, кастрюле ярас умĕн сивĕ шывпа çумалла. Аш çемçелет, организм та ăна лайăхрах йышăнать.

● Шăла пулла, трескана, çăрттана 15-20 минутран ытла пĕçермелле мар.

● Вĕри компота хăвăрт сивĕтмелле чухне компот кастрюльне шултра тăвар хушнă сивĕ шыв савăтне лартмалла.

● Пĕçернĕ чухне шампиньон тĕсне ан çухаттăр тесен вĕри шыва лимон йăçекĕ ямалла. Кăмпа тути ăпăхасран тĕрлĕ техĕмлĕх хушма кирлĕ мар.

● Пельменьпе хуран кукли валли чустана май килнĕ таран çăхерех йĕтĕрлемелле, мĕншĕн тесен организм хулăн чустаран хатĕрленĕ çимĕçе ăпăх йышăнать.

● 1-2 шăл ыхра тата лавр çулçи хушса пĕçерсен çĕрулми питĕ тутлă пулать.

ТĔПЕЛТЕ ЧУХНЕ

Купăста йăçĕтме кая юлман-ха

«Хăвăрт» купăста. Купăстана улăм пĕрчи пек турамалла, кишĕре шултра теркăпа хырмалла. Хутăштармалла, витрене хумалла. Купăста шывĕ ямалла. Ăна хатĕрлеме вĕретсе сивĕтнĕ 3 литр шывра пĕчĕкрех 2 стакан шултра йышши тăвар тата 1 стакан сахăр песукĕ ирĕлтермелле. Купăста хунă витрене ямалла, пахча çимĕçе йывăр ăпала хурса пусăрăнтармалла. Купăста темиçе кунранах çиме хатĕр пулса çитет.

Тутлă купăста. 3 килограмм купăста, 2 чей кашăкĕ вĕтетнĕ хĕрлĕ пăрăç, 2 пуç ыхра, 3-4 кишĕр кирлĕ.

Купăстана кучанĕннен тасатса 10-12 пая пайламалла. Эмальленĕ кастрюле хумалла, хĕрлĕ пăрăç сапмалла. 5-6 шăл ыхра, теркăпа хырнă кишĕр хушмалла. Тепĕр сий купăста хумалла, каллех пăрăç, ыхра, кишĕр сапмалла. Вĕрекен маринад /çур литр шыв, 2-шер апат кашăкĕ сахăрпа тăвар, çур стакан ăсен-тăран çăвĕ, 100 грамм уксус /столовăй/, 3 лавр çулçи, ырă шăршăллă пăрăç 6 пĕрчĕ/ ямалла. Купăстана йывăр ăпалапа пусăрăнтармалла. Ăна 2 талăк ăшă пăлĕмре тытмалла, ун хыççăн сивĕтмĕшре е нăхрепре упрамалла.

Купăста хĕрлĕ кăшманпа. Эмальленĕ 1 витре хатĕрлеме 8 килограмм купăста, 100-шер грамм ыхрапа хĕрен, вĕтетнĕ петрушка, 200 грамм хĕрлĕ кăшман, хĕрлĕ пăрăç /йăççи/ 3 штук кирлĕ.

Маринад валли: 4 литр шыв, 200-шер грамм шултра йышши тăвар тата сахăр песукĕ.

Пахча çимĕçе çуса тасатмалла. Купăстана 200-300 грамлă касăксем туса касмалла. Ыхрапа петрушкăна вĕтетмелле, хĕрене шултра теркăпа хырмалла, хĕрлĕ кăшмана тăваткăлласа турамалла. Çимĕçе витрене тултармалла.

Палăртнă чухлĕ шыва вĕретмелле, кăштах сивĕнсен купăста çине ямалла. Хупăпа хупласа йывăр ăпала хумалла. Витрене 18° температурăра 48 сехет тытмалла, ун хыççăн сивĕ вырăна лартмалла. 5 кунран купăстана çиме юрать.

Провансаль купăста. Провансаль купăста хатĕрлемешкĕн касăксемпе йăçĕтнĕ купăстана турамалла /3-4 сантиметр тăршшĕ/. Тĕрлĕ техĕмлĕх хушмалла. Тĕслĕхрен, 3 килограмм купăста, 400-шер грамм сахăр песукĕ, ăсен-тăран çăвĕ, 5 грамм горчица çăнăхĕ, 250 грамм шур сырли, йăçĕтнĕ панулми кăштах /турамсемпе/. Тутине кура лимон йăçекĕ хушма юрать. Çаксене веçех хутăштармалла. Хутăша вĕрилентернĕ кĕленче савăтсене тултармалла. Сивĕ вырăнта упрамалла.

Антонина СЕРГЕЕВА хатĕрленĕ.

ЫРĂ ТĔСЛĔХ

«Çумра çук пулсан та – чунра пур»

Юрий Ендеева ентешĕсем манмаççĕ

«Паттăр ячĕ ĕмĕре», «Паттăрлăх вилĕмсĕр» – теççĕ халăхра. Паттăр салтак – çывăх çыннисен, тăванĕсен, юлташĕсемпе тусĕсен, ял-йыш асăнче яланлăхах юлать. Çакна Патăрьел районĕнчи Аслă Арапуçра тепĕр хут курса ĕнентĕм. Кунти культура çуртĕнче тата шкулта Чечняри вăрçа хутшăннă Юрий Ендеева асăнса волейбол турнирĕ иртрĕ. Аслă Арапуç ял тăрăхĕн, шкул дирекцийĕпе вĕрентекенсен ашшĕ-амăшĕн, юлташĕсен, пĕрле вĕреннисен, РФ Айăплава пурнăçлакан службин Чăваш Енри управленийĕн «Страж» ятарлă пайĕн ĕçченĕсен пуçарăвĕпе ăна 7-мĕш хут йĕркелерĕç.

Ăмăртăва уçнă май спортсменсене Патăрьелти ачасемпе çамрăксен «Паттăр» спорт шкулĕн директорĕ Алексей Краснов, Аслă Арапуç ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Владимир Секретов, вырăнти шкул директорĕ Вячеслав Чернышов, Юрий Ивановичăн çарти юлташĕсем – Андрей Андреев, Александр Мальцев, Дмитрий Александров, Андрей Фролов, Иван Пигачев, Александр Мясников, Александр Антонов – ашшĕпе амăшĕ Валентина Степановнăпа Иван Федорович, мăшăрĕ Ирина, шкулта пĕр класра вĕреннисем саламларĕç.

«Турнира спортпа туслă çамрăксем ытларах та ытларах хутшăнни питĕ савăнтарать пире. Паян 7 команда вăй виçĕ. Юрий Ендеева манмастпăр эпир. Лăпкă та сăпайлă йĕкĕтчĕ вăл, анчах унăн паттăрлăхĕ, çынлăхĕ капашсăр пысăкчĕ. Чăн-чăн юлташ, чи шанчăклă çын пулнă вăл. Ывăлĕ çĕршыва, çынна юрăхлă пулнăшăн савăнать ашшĕ-амăшĕ. Вăрçăра пĕрле пулнă юлташĕсем килнишĕн питĕ хĕпĕртеççĕ вĕсем. Юрий Ендеев çумра çук пулсан та – чунра пур. Çак ăмăртăва пуçаракансене тата йĕркелекенсене, культура ĕçченĕсене пурне те тав сăмахĕ каласшăн. Çынна ырă туни нихăçан та çĕре ўкмест. Ырăпах таврăнать. Хăшĕн-пĕрин паян, канмалли кун, килте те ĕç пуррччĕ-тĕр, апла пулин те чылайăшĕн чунĕ спортзала туртăннă», – палăртрĕ шухăш-кăмăлне Владимир Секретов.

Командир çумĕ, Андрей Андреев подполковник, çамрăксене Юра Ендеевăн паттăрлăхĕ, спорт пурнăçра йывăрлăхсене çĕнтерме пулăшни çинчен каласа пачĕ. «Манăн шанчăклă юлташчĕ вăл. Вăрçа та пĕрлех кайнă эпир. Юра снайпер пулнă. Эпĕ автоматчикчĕ. Вăл пулман тăк паян эпĕ сирĕн умра тăраймастăмччĕ. Мана, çапăçура аманнăскере, Юра сĕтĕрсе тухрĕ. Чăннипех паттăр вăл сирĕн ентеш», – чунне уçрĕ Андрей Иванович.

Çарта десантник пулнă Юрий Ендеев каярах «Страж» ятарлă пайра ĕçленĕ. Вăл çичĕ хутчен Чечняра пулнă. Хăюлăхпа паттăрлăхшăн нумай наградăна тивĕçнĕ. Анчах чире пула пурнăçран сарăмсăр уйрăлнă. Шкулта вĕреннĕ чухне те, каярахпа та чупас, кĕрешес, йĕлтĕрпе, велосипедпа ярăнас енĕпе, çынлăхĕпе, ырă кăмăлĕпе палăрнă. «Стражсем» çак кун /турнира Юрăн çуралнă кунĕ тĕлне йĕркеленĕ. Пурăннă пулсан вăл декабрьте 41 тултармаллаччĕ/ Юрий Ендеева пытарнă масарта пулса ăна аса илчĕç. Унтан ашшĕпе амăшĕ патне килне кайрĕç. Иван Федоровичпа Валентина Степановна Ендеевсем вĕсене питĕ ăшпиллĕн кĕтсе илчĕç. «Эсир килсен ывăлăма Юрăна курнă пекех туйăнать. Тавах ĕнтĕ сире!»– шывланнă куçне шăлчĕ Валя аппа. «Страж» ĕçченĕсем шкул ачисем волейболла епле вылянине хаклама та хутшăнчĕç. Çивĕч кĕрешўре кăçал Патăрьел районĕнчи Тури Туçа шкулĕн команди /тренерĕ В.Козлов/ пĕрремĕш вырăна тухрĕ. Патăрьел шкулĕн 1-мĕш команди – 2-мĕш. Комсомольски районĕнчи Çĕнĕ Мăратсен команди – виççĕмĕш. «Чи лайăх хўтĕлевçĕ» номинацире Патăрьелти 1-мĕш шкулта вĕренекен Д.Илюткин палăрчĕ. Çĕнĕ Мăратри П.Шуряшкин «Чи лайăх тапăнса вылякан» ята çĕнсе илчĕ. Тури Туçари А.Астраханцев вара – «Чи лайăх бомбардир». Çĕнтерўçĕсене Юра Ендеевăн çарти тусĕсем, мăшăрĕ дипломсемпе, хаклă парнесемпе чысларĕç. Çавăн пекех командăсене турнира хатĕрленĕ тренерсене те, культура çурчĕн ĕçченĕсене те манмарĕç, асăнмалăх парнесем пачĕç.

> ЮРĂНА ЮЛАШКИ ÇУЛА ĂÇАТНĂРАНПА ТЕМИÇЕ ÇУЛ ТА ИРТРĔ ĔНТĔ. АПЛА ПУЛИН ТЕ ХАМА ВАЛЛИ УН ПЕК ÇЫВĂХ ЮЛТАШ ТУПАЙМАРĂМ. ТУПАЯССĂМ ТА ÇУК-ТĂР...

«Спецназсен туслăхĕ питĕ çирĕп. Çĕре кĕнĕ кашни юлташ патне кайса асăнса килетпĕр. Çакнашкал турнирсем йĕркелени питех те вырăнлă тесе шухăшлатăп. Паянхи çамрăксем паттăр, харсăр пулччăр тесе вĕрентес, кăтартас килет. Пурнăçра пирĕн йăнăшсене ан туччăр, пирĕнтен лайăхрах пулччăр. Юра аслисене хисеплетчĕ, кĕçĕннисене вĕрентме тăрăшатчĕ. Дисциплинăна çирĕп пăхăнатчĕ, пăтăрмахсенчен пăрăнма тăрăшатчĕ, пурнăç çулĕпе тĕрĕс утатчĕ», – терĕ тĕлпулу каçĕнче Андрей Андреев подполковник. Юрий Ендеевăн чи çывăх тусĕ Александр Мальцев капитан та сăмах каларĕ. «Юрăна юлашки çула ăсатнăранпа темиçе çул та иртрĕ ĕнтĕ. Апла пулин те хама валли ун пек çывăх юлташ тупаймарăм. Тупаяссăм та çук унашкаллине. Вăл манран 4 çул аслăрахчĕ. Яланах унпа канашлаттăмччĕ, кирек хăш ыйтăва та пĕрле сăтсе яваттăмăр. Ирхине вăрансан тăтăшах: «Салам, тусăм!»– тесе шăнкăравлас килет... Çĕнĕ куна çывăх юлташа сывлăх сунса саламланинчен пуçлани вăл – мĕн тери телей! Халĕ ĕнтĕ хамран кĕçĕннисем ман патăма шăнкăравлаççĕ, сĕнў-канаш ыйтаççĕ. Кашни утăмрах Юра çитменнине туятăп. Спортзалран таврăнсан симĕс чей ĕçсе сехечĕ-сехечĕпе каласса ларатăмăр. Упраймарăм сана, тусăм, каçар!» – терĕ вăл.

Шухăшăма вĕçлесе пăнчă лартиччен вара манăн акă мĕн калас килет: çакăн пек турнир йĕркелени тем тесен те ашшĕ-амăшĕн, çывăх çыннисен хуйхине кăшт та пулин пусарма пулăшать. Сăмах май, Юрăн 75 çулти ашшĕ Иван Федорович паянхи кунчченех ялти хоккей площадкине конькипе ярăнма çўрет, ыттисене те спортпа туслашма сĕнет. Сывă пурнăç йĕркине çирĕп пăхăннă, паттăрлăхĕпе палăрнă Юрий Ендеев – Аслă Арапуç яш-кĕрĕмĕпе хĕрупраçĕшĕн чăннипех ырă тĕслĕх.

■ **Роза ВЛАСОВА**

ХАЛĂХ ПУЛТАРУЛĂХĔ

Хаклă пурлăх тупрăм

Теччĕри чăваш наци культура центрĕн председателĕ Владимир Вериялов хирĕçре пурăнакан Лизук аппа чăваш юррисене юрлани çинчен каласа панăччĕ. Анчах та эпĕ унпа кăçалччен тĕл пулса калаçаймарăм.

Çуллахи канмалли кун Теччĕне пырсан Владимир Григорьевичсен тĕлĕнче чарăнтăм. Вĕсем килĕнче çукран хирĕç пўрт умĕнче сак çинче ларакан хуçипе калаçса кайрăмăр. Хĕрарăм кўршисем Кивьяла хĕрĕ патне кайнине пĕлтерчĕ. Văхăт пуррипе усă курса Лизук аппаран Хупкĕпер юррисене ыйтса пĕлме шутларăм. Вăл манпа тарават калаçни чуна тыткăнларĕ.

Эпĕ ăна Çĕньялăн пĕр юррине аса илтертĕм. Вăл ăна вĕçне çитичченех юрласа чуна çĕклерĕ. Çак юрра пирĕн ялти хĕрарăмсем кашни уяврах шăрантараççĕ. Анчах та ăна самаях кĕскетсе юрлаççĕ. Сăмахĕсене пирĕн ял çынни, вăрçăра пуç хунă Михайлов Иванĕ çырнă. Кĕвви те унăнах пулас...

Эп те кĕтĕм колхоза
Кĕтўç Мишка, патрак Кришка,
Чухăн Ванькка, среднĕк
Панькка
Кĕчĕç колхоза,
Кĕчĕç колхоза.

Ĕнисене, лашисене,
Уй-хирсене, çарансене
Пачĕç колхоза,
Пачĕç колхоза.

Пурте пĕрле ĕçлес терĕç,
Кунне-çĕрне уйăрмарĕç
Ĕç văхăтĕнче,
Ĕç văхăтĕнче.
/.../

– Малтан колхоза чухăн çынсем анчах кĕнĕ вĕт. Пуянраххисем кĕресшĕн пулман. Вĕсене те влаç тĕрлĕ майпа унта хăваланă: кама ялтан тухса каймалла тунă, хирĕç тăракансене – тĕрмене лартнă, хăшне-пĕрне какай, çăмарта, сĕт, турăх, сурăх çăмĕ ахаль çынсенчен икĕ хут ытла партарнă. Налукпа татăлайманнисене хупнă. Акă Михаил Степанович Янышев арăмне, Мария Артемьевăна, тĕрмене лартрĕç... Вăл çавăнтах вилчĕ, – каласа кăтартрĕ Лизук аппа.

Лизук аппа, Елизавета Степановна Курмышкина, Тутар Республикинчи Теччĕ районĕнчи Хупкĕпер ялĕнче çуралса ўснĕ. Ашшĕ, Степан Тихонович, вăрçа văхăтĕнче арманта ĕçленĕ. Тырă вырнăшăн панă «карницан» 29 килограмĕ тухманшăн ăна вунă çула тĕрмене ăсатнă, каялла таврăнайман вăл. Амăшĕ, Елена Кузьминична, Ăнăран, Кăрсаксен йăхĕнчен, ялтах пурăнса кун-çулне ирттернĕ.

1951 çулта Лизук аппа Теччĕре пурăнакан Пухтель ачине Спиридонов Ваççука качча кайнă. Йывăр çын чухне вĕсем уйрăлнă. Яла таврăнсан малтан Ваççук тăванĕ патĕнче пурăннă, ывăлĕ çуралсан хваттере уйрăлса тухнă. Уйрăм пурăнас тесе Çĕньялти Альтук аппăшĕнчен пўрт илнĕ. Анчах вăл çĕрĕк пулнă. Лизукпа çĕрле /кăнтăрла лаша паман/ вăрмана кая-кая йывăç илсе килнĕ, пўртне те, хуралтине те йĕркене кĕртнĕ. Ывăлĕ сатур ўснĕ. Вăл салтакран килессе кĕтсе ун валли колхоз çĕнĕ трактор-машина тытса тăнă. Анчах та çамрăк ялта юлас темен. Теччĕ хулинче çўллĕ çуртсем тунă çĕрте 15 çул кран çинче ĕçленĕ. «Çакăнти 2-4 хутлă çуртсене веçех вăл çĕклерĕ», – аллипе сулса кăтартрĕ Лизук аппа.

Ывăлне авлантарас тесе вăл Дон çинчи Ростов хулине çĕрулми сутма кайса килнĕ. Кинĕ – Кушкуй хĕрĕ. Вĕсен ывăлпа хĕр, мăнуксем пур. Лизук аппа мăнукĕсене те хăех пăхса ўстернĕ. Ачисемпе мăнукĕсем Теччĕрех пурăнаççĕ. Кил хуçи пысăк та тирпейлĕ пўртре пĕчченех кун кунлать, юрласа чунне йăпатать. «Çывăрма выртсан та, урамра хапха çумĕнче ларнă чух та ĕлĕкхи юрăсене шăрантаратăп», – тет.

Акă хурлăхлă юрă пуçларĕ:
Юрланă хăмăш хурлăн:
– Ан тив, ан тив мана,
Ялап чĕлхеллĕ пурнăç
Ан хурлантар чуна!
/.../ Хăйне савма вăл ыйтрĕ, –
Савмарăм эп ăна;
Мана укçа вăл сĕнчĕ, –
Илмерĕм укçине.
Çиленчĕ, çĕçĕ лартрĕ
Вăл ман кăкăрăма,
Ман ўтĕме пытарчĕ
Çак чăнкă çырана. /.../

Хушса хучĕ: «Пĕччен пурăнма çăмăл мар. Анчах мĕн тăвăн? Анне те 33 çулта тăлăха юлчĕ. Аннене ывăр пурнăç çак юрра юрлаттарнă пулмалла. Ача чухнех сахал мар илтнĕ. Чунĕ тăвăлса çитсен хăйне йĕрсе йăпататчĕ. Анне çак юрра нихçан та вĕçне çити юрлаймастчĕ, кăшт лăплансан вĕçне юрлатчĕ. Пире чыссăр ĕç пулса иртнине кăтартса хăратас темен-ши анне?»

Хăна юррисене Лизук аппа хаваспах юрларĕ:

Шур Атăлпа ишсе пынă чух
Шур хăваран тытса чарăнтăм.
Урампала иртсе пынă чух
Хам тăвансене курма
чарăнтăм.

Шур юр çăваканччĕ те
каяканччĕ;
Кăçал çунă шурă юр, ай,
каймарĕ.
Хуйхă пулаканччĕ те
иртекенччĕ;
Кăçал пулнă хуйхăсем, ай,
иртмеççĕ.

2010 çулта эпĕ кўршĕри Хупкĕпер ялĕн уявĕнче пулнăччĕ. Кинемейсем тăваташăн тăрса Çимĕк кунĕнче карталанса юрланă юрăсене аса илчĕç. Ача чухне илтнĕ çак юрăсене. Çав văхăтсемшĕн тунсăхланине пĕлтерсен Лизук аппа хаваспах вĕсене юрласа пачĕ:

Аякран шурă курăнакан,
Аякран шурă курăнакан

Хуратул чечекĕ мар,
мар-ши çав,
Хуратул чечекĕ те мар,
мар-ши çав?

Кĕвве те ăста юрлакан та,
Кĕвве те ăста юрлакан та
Хупкĕпер хĕрсен мар,
мар-ши çав,
Хупкĕпер хĕрсен мар,
мар-ши çав?
/.../

Лизук аппа такмаксемпе туй, салтак юррисене те нумай пĕлет. Акă пĕри:

Ан çиленĕр-ха, тăвансем,
Эп такмака такăнтăм.
Эпĕ такмак хутаççине
Киле манса хăвартăм.

Апла марччĕ-çке эпир,
Капла марччĕ-çке эпир.
Сар кайăксем юрланă чух
Юрлаканччĕ-çке эпир.

Анне тунă-ши мана,
Атте пăхнă-ши мана?
Тĕнчери ырлăха курма
Турă хушнă-ши мана?
/.../

Лизук аппа юрăсене аса илнĕ май çырса хума шантарчĕ. Чăнах та, халĕччен хамăр таврара çакăн чухлĕ юрă пĕлекен çынна тĕл пулманччĕ. Тавах сана, Лизук аппа, хăвăн ытармалла мар хаклă пурлăхна тăван халăхна парнеленĕшĕн.

■ **Николай РОЗОВ.**
Теччĕ хули

Темтепĕр

● Акă 4 çул ĕнтĕ Париж урамĕсенче уйрăлми мăшăра курма пулать. Йытă кăвакалпа туслашнă – Франци тĕп хулинче пурăнакансем çакна тахçанах хăнăхса çитнĕ ĕнтĕ. Çапах та туристсем ку таранчченех тĕлĕнеççĕ: мĕнле капла пулма пултарать-ха? Анчăкпа кăвакал вара ним пулман пекех çўреççĕ. Чăн-чăн туслăх вĕсен!

● Раççейре «корейла хатĕрленĕ кишĕре» пурте юратса çиеççĕ. Корейăра хăйĕнче ку апат пирки пĕлмеççĕ те. Ăна Совет Союзне вăрçă хыççăн куçса килнĕ кореецсем шухăшласа тупнă. Хăйсен йăлана кĕнĕ çимĕçне – кимчхи /купăста пăрăçпа, техĕмлĕхсемпе/ – хатĕрлеме хăтланса Корейăран тухнисем тўрех йывăрлăхпа тĕл пулнă, мĕншĕн тесен ССР Союзĕнче пекин купăстине тупма май та пулман темелле. Апата çапла кишĕр хушма пуçланă. Văхăт иртнĕçемĕн вăл купăстана хĕссе кăларнă, пăрăçлă кишĕр çеç юлнă. Раççейри хĕрарăмсем ăна килĕштерсе йышăннă.

Реклама Пĕлтерў
Факс: /8352/ 28-83-70 E-mail: hypar2008@rambler.ru
Адрес: 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13-мĕш çурт, 316-мĕш пўлĕм
Тел.: /8352/ 28-83-70, /8352/ 56-20-07

АУ "Издательский дом "Хыпар"
требуется МЕНЕДЖЕР ПО РЕКЛАМЕ
Зарплата высокая + %
Справки по телефонам: 56-00-67, 56-04-17

АУ "Издательский дом "Хыпар"
СДАЕТ ПОМЕЩЕНИЯ ПОД ОФИС
на 7 этаже Дома печати
Справки по телефонам: 28-83-70, 56-04-17

Раççей Федерацийĕн "Раççей Федерацийĕн судйисен статусĕ çинчен" саккунĕн 5-мĕш статийпе килĕшўллĕн Чăваш Республикинчи судьясен квалификаци коллегийĕ
– Етĕрне район сучĕн председателĕн,
– Куславкка район сучĕн председателĕн,
– Улатăр район сучĕн председателĕн,
– Шупашкар хулин Ленин район сучĕн судйин,
– Çĕнĕ Шупашкар хула сучĕн судйин,
– Элĕк районĕн 1-мĕш суд участокĕн миравай судйин,
– Пăрачкав районĕн 1-мĕш суд участокĕн миравай судйин,
– Канаш хулин 1-мĕш суд участокĕн миравай судйин
вакантлă должноçĕсем уçăлни çинчен пĕлтерет.

Раççей Федерацийĕн "Раççей Федерацийĕн судйисен статусĕ çинчен" саккунĕн 5-мĕш статийин 6-мĕш пунктĕнче кăтартнă документсене тата ыйтса çырнине ĕç кунĕсенче 2015 çулхи январь уйăхĕн 26-мĕшĕччен 8 сехетрен пуçласа 12 сехетчен тата 13 сехетрен пуçласа 17 сехетчен, 2015 çулхи январь уйăхĕн 26-мĕшĕнче 18 сехетчен çак адреспа йышăнаççĕ: Шупашкар хули, Президент бульварĕ, 12 çурт, 302 пўлĕм.

Ыйтса çырнисене хăçан тата ăçта пăхса тухассине претендентсене ятарлă йĕркепе пĕлтереççĕ.

ОАО "Чувашхлебопродукт" на постоянной основе **покупает ПШЕНИЦУ продовольственную.**
Цена 10100 рублей за тонну с НДС.
Оплата своевременная.
Телефон отдела закупок 8 /8352/ 66-21-51.

Администрация Турмышского сельского поселения Янтиковского района сообщает, что 16.01.2015 г. в 14.00 часов состоится открытый аукцион по продаже земельного участка.

Характеристика объекта купли-продажи:

Лот №1 - земельный участок, категория земель: земли сельскохозяйственного назначения, разрешенное использование: для ведения сельскохозяйственного производства, общая площадь 640 000 кв.м., кадастровый номер: 21:26:260501:473, адрес (местонахождение) объекта: Чувашская Республика - Чувашия, Янтиковский р-н, с/п Турмышское. Начальная цена земельного участка - 24320,00 рублей.

Заявки на участие в аукционе принимаются до 12.01.2015 г.

За справками и информацией обращаться по адресу: Янтиковский район, с.Турмыши, ул. Советская, д. 14, администрация Турмышского сельского поселения и на сайте Турмышского сельского поселения Янтиковского района по адресу: **http://gov.cap.ru/Default.aspx?gov_id=547,** баннер "Конкурсы и аукционы", а также по телефону: 8(83548) 2-53-02, 2-52-32.

чăваш халăх хаçачĕ
ХЫПАР
Учредительсем: Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ, Чăваш Республикин Информаци политики тата массăллă коммуникацисен министерствин "Хыпар" Издательство çурчĕ" Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ
Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен сферинчи надзор службин Чăваш Республикинчи управленийĕнче 2013 çулхи çу уйăхĕн 31-мĕшĕнче ПИ ТУ21-00281 №-пе регистрациленĕ
"Хыпар" индексĕ – 54800, "Хыпар"-шăматкун"– 78353

Директор-тĕп редактор В.В.ТУРКАЙ
С.П.СТЕПЧЕНКО – пĕрремĕш заместитель
М.М.АРЛАНОВ – коммерци директорĕ
РЕДКОЛЛЕГИ:
Г.А.МАКСИМОВ – тĕп редактор заместителĕ
Н.Г.СМИРНОВА – культурăпа чăваш диаспорин пайĕн редакторĕ
А.А.ТАРАСОВ – тĕп редактор заместителĕ
В.В.ТУРКАЙ – директор-тĕп редактор
Ф.П.ЧЕРНОВ – явапла́ă секретарь – техника центрĕн пуçлăхĕ
Дежурнăй редактор В.И.СМИРНОВА

Редакципе издатель адресĕ: 428019, Шупашкар, Иван Яковлев проспекчĕ, 13, Пичет çурчĕ, III хут, "Хыпар".
ТЕЛЕФОНСЕМ
Редакци телефонĕсем:
56-00-67 – директор – тĕп редактор
56-33-64 – тĕп редактор çумĕ
56-04-17 – коммерци директорĕ
62-08-62 – секретариат, явапла́ă секретарь
пайсем:
28-85-01 – общество пурнăçĕпе политика пайĕ
56-05-21 – журналист тĕпчевĕсен тата куçару пайĕ
56-08-62 – экономика пайĕ
56-03-04, 28-85-91 – социаллă пурнăçпа вĕренў пайĕ
56-08-61 – культурăпа чăваш диаспорин пайĕ
56-04-26, 28-82-91 – хроникăпа хамăр корреспондентсен пайĕ
28-85-87 – корректорсем
56-45-94 – фотокорреспондент
бухгалтери – 28-83-64
коммерци дирекцийĕ:
28-83-70 – рекламăпа пĕлтерўсен пайĕ
56-20-07 – çырăнтарупа реализаци пайĕ
корр. пункчĕсем:
/8-835-38/ 2-18-02, 2-11-95 – Йĕпреç
28-85-71 – Чăваш Республикин Журналистсен союзĕн правленийĕ
hypar2008@rambler.ru
Факс: /8352/ 28-83-70
Электронлă почта:
hypar1@mail.ru
hypar@mail.ru
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13. 56-00-23 – издательство директорĕ.
Ĕç кунĕ 8 сехет те 45 минутран пуçласа 17 сехет те 45 минутчен, шăматкунпа вырсарникунсăр пуçне.
РЕКЛАМĂПА ПĔЛТЕРЎСЕНЕ 316-мĕш пўлĕмре йышăнаççĕ. Тел. 28-83-70.
Офсет пичечĕ. Калăпăшĕ 2 пичет листи. Рекламăпа пĕлтерўсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем явапла́ă.
Хаçатри рекламăсăр тўлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама çинчен" федераци саккунĕн 2 ст. килĕшўллĕн **"Аталану çулĕпе", "Ят-сум", "Ĕç тата çын", "Самана таппи", "Компетентлă"** рубрикăсемпе пичетленеççĕ.
Номере 16.12.2014 алă пустă.
Пичете графикпа 21 сехетре алă пусмалла, 20 сехет те 45 минутра алă пустă.
Тираж 7392. Заказ 4868.